Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
МАРТ
17,
КĔÇНЕРНИКУН
62 (4875)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

ТĂВАН ÇĔРШЫВĂН ХĂЙУЛĂ ТА ПАТТĂР ЫВĂЛĔСЕНЕ САЛАМ!

Çамрăксене большевикла воспитани парас ĕçе тивĕçлипе организацилер

ПСК(б) Парти Тĕпком Пленумĕ 1937 çулти мартăн 5-мĕшĕнче Сталин йулташ „Партилĕ ĕçĕн çитменлĕхĕсем çинчен, троцкисла тата ытти икĕпитлисене пĕтерес ĕçсем çинчен" тунă доклад тăрăх йышăннă решени комсомол организацисем умĕнче те пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Çав задачăсене пурнăçлас майпа ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн IV-мĕш Пленумĕ 1937 çулти август уйăхĕнче „халăх тăшманĕсен комсомол ăшĕнчи ĕçĕсем çинчен" постановлени йышăнчĕ. Комсомол Тĕпкомĕн Пленумĕ вăл постановленире троцкисла-бухаринла шпионсем, террориссем, социалисăмла тăван çĕршыва сутакансем нумай вăхăт хушши комсомол организацийĕсенче сийĕн туса пурăннине палăртса, комсомол ретне халăх тăшманĕсенчен тасатасси çинчен хытăн каласа хăварчĕ.

Çак иртнĕ вăхăтра комсомол организацисем хăйсен ретне троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандитсенчен тасатас тĕлĕшпе чылай пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. Комсомол организацин ĕçри пултаруллăхĕ, активлăхĕ хăпарчĕ. Комсомол йышĕ куллен-кун ÿссе, тĕреклене вăйланса пырать. Кăçалхи январьпе февраль уйăхĕсем хушшинче кăна Чăваш республикинче, 2719 çамрăк Ленинла комсомол ретне кĕнĕ. Халиччен комсомол организацийĕ пулман предприятисенче, колхозсенче комсомол организацисем çĕнĕрен организациленĕ: Сĕнтĕрвăрри районĕнче—7, Вăрнар районĕнче —6, Канашра—6. Комсомол организаци чи лайăх, парти ĕçне парăнса ĕçлекен çамрăксен шучĕпе ÿссе пырать.

Комсомол йышĕ ÿсни вăл — халăх хушшинче, çамрăксен хушшинче комсомол организацин авторитечĕ тĕреклене, çирĕпленсе пынине кăтартать.

Комсомол организацийĕ çакăн пек авторитетлă пысăк вăй пулса тăнине фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла агенчĕсем çав тери кураймаççĕ. Вĕсем комсомол организацине шалтан вăйсăрлатма, ăна салатса яма тăрăшаççĕ. Вĕсем комсомол организацинче провокаци, елек сарассипе организациленĕ, тÿрĕ ĕçлекен лайăх комсомолецсене вараласа, комсомол ретĕнчен чухăмăн кăларттарнă. Комсомолăн чылай организацийĕсем, çав тăшманла провокацине вăхăтра туйса илеймен пирки, комсомолран кăларас тĕлĕшпе йăнăш туни те сахал мар пулнă.

Комсомолăн облăçри XIV-мĕш конференцийĕ çинчен уйрăмăнах чарăнса тăмала. Конференци, карьериссемпе елекçĕсем хыççăн кайса, пысăк йăнăшсем тунă. Айăпсăр çынсенех халăх тăшманĕсем вырăнне хурса, комсомол ретĕнчен те ĕçрен те кăлара-кăлара янă. „Çамрăк большевик" хаçат редакторне Яшевский йулташа халăх тăшманĕ вырăнне хурса комсомолран кăларса яраççĕ. Вăл темиçе уйăх хушши ĕççĕр çÿрет. Комсомол обкомĕн секретарĕсем пулса ĕçленĕ Сымокинпа Терентьев йулташсене „халăх тăшманĕсем" тесе, конференцирен те, комсомолран та, ĕçрен те кăлараççĕ. Çавăн пек „халăх тăшманĕ", „тăшмансене пулăшса пыракансем" тесе конференцире 14 çынна комсомолран та ĕçрен те кăларнă. Анчах тĕрĕсленĕ хыççăн, 14 çынран пĕри те халăх тăшманĕ пулман иккенĕ паларнă.

Комсомолăн Шăхасан райкомĕ П. Прокопьев йулташа хăйне райком заседанине чĕнтермесĕрех комсомолран кăларнă. „Пединститутра вĕреннĕ чухне троцкиссемпе: Николаев тата Ширяевпа çыхăну тытнă, Прокопьев шкул укçине салатнă", тесе Прокопьева тĕрмене хупса лартнă. Ăна тĕрмене хупасси пĕтĕмпех Ухманри Герасимовпа Иванов комсомолецсен елеклĕ жалăби тăрăх пулнă. Халĕ ку ĕçе тĕрĕсленĕ. Прокопьев йулташ айăпсăррине кура, ăна комсомол ретне кайала илнĕ.

Комсомолăн Тăвай райкомĕ И. Краснова çынсенчен илнĕ сăмахсем тăрăх Тăвай шкулĕнче троцкисла ушкăн пур. Краснов та çав ушкăнра тăрать пуль тесе комсомолран кăларнă. Тăвай шкулĕнче троцкисла ушкăн пуррипе çуккине райкомра ĕçлекенсем хăйсем тĕрĕслесе пăхман. Çынсем каланă „тет" сăмаха ĕненнĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Яшчеринкăри шкулта вĕрентекен учител Орлов Н. пĕрмаях ялти пуçламĕш организацинчи комсомолецсем çинчен елек сарнă: „Комсомолецсем ĕçсе ÿсĕрĕлсе çÿреççĕ, мана кураймаççĕ", тенĕ. Çак Орлов елекçĕн чăн сăнсăпачĕ çапла: унăн хăйпе пĕр тăван пичĕшĕ троцкис, вăл ăна пытарса пурăннă. Ашшĕ судпа айăпланнă, хурăнташĕ-тăванĕсем кулак-лишенецсемпе пĕрле пурăннă пулнă. Çаксем çинчен Орлов комсомол организацине каламан—пытарнă.

Грачов йулташ, комсомол обкомĕн спецсекторĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ чухне, обкомола: „Грачов арăмĕ кулак хĕрĕ, судпа айăпланнă", тесе çырнă жалăба пынă. Çак жалăбăна тĕрĕслеме Прохоровпа Красцов комсомолецсене хушнă. Вĕсем тĕплĕн тĕрĕслемесĕрех: „Çырни пурте тĕрĕс", тесе пĕлтернĕ. Обкомол хăй йенчен васкавлă решени йышăнса, Грачова ĕçрен кăларса янă. Хаљ вăл айăпсăрри паларнă. Çак фактсем комсомолран кăларас ĕç çине обкомра ĕçлекенсем хăйсем те хăшпĕр чухне сăмалттайла пăхни çинчен каласçĕ.

Халăх тăшманĕсем — троцкисла-бухаринла бандитсем, буржуалă националиссем комсомол организацин çак йăнăшĕсемпе хăйсене майлă усă курасшăн пулнă, хăйсем валљи резерв хатĕрлеме хăтланнă. Анчах çак тăшмансен тискер планĕ çĕмĕрĕлчĕ.

Комсомолран кăларас тата кăларнисен апелљацийĕсене пăхса тухас ĕçре Чăваш комсомол организацийĕ тунă йăнăшсене ПСК(б) Парти Тĕпкомĕн январьти Пленумĕ хыççăн комсомол обкомĕ те, комсомолăн райондри комитечĕсем те, пуçламĕш организацисем те тÿрлетес тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнчĕç. Анчах та, тÿрех калас пулать, йăнăшсене тÿрлетесси питĕ вăраххăн пырать-ха. Кунта халĕ те формаљнă-бÿрократла ĕçлени паларать.

Комсомолăн облăçри XIV-мĕш конференцийĕ пулса иртнĕренпе Комсомол обкомне 245 апелљаци пырса кĕнĕ. Вĕсенчен 182 апелљацине çеç пăхса тухнă. Обкомра пăхса тухмали тата 110 апелљаци выртать.

Тунă йăнăшсене хăвăртрах тÿрлетес, халăх тăшманĕсене, провокаторсене, елекçĕсене, карьериссене тупса, тивĕçлипе ответ тыттарас вырăнне, хăшпĕр организацисем пĕр йенчен тепĕр йенне кайса ÿкни паларать. Вĕсем большевикла самокритикăпа çитменлĕхсем çинчен тухса калаçакан çынсене „карьериссем", „клеветниксем", тесе айăплама пăхаççĕ.

Тăвай районĕнче ПСК(б)П райкомĕ пуçарнипе, пĕтĕм комсомолецсене района чĕнтернĕ те комсомолецсем хушшинче тунă йăнăшсене „тÿрлетме" тапратнă. Çак пухура питĕ нумай „карьериссем" тупса „палăртнă": комсомол райком секретарĕ Павлов карьерис, комсомол обкомĕнчен килнĕ Баранов та карьерис, кулак ачи, тенĕ.

Пирĕн умра тăракан задачă вăл—чăн карьериссене тупса вĕсене ответ тыттарасси. Пĕлмесĕрех, тĕрĕслемесĕрех „тет" сăмах хыççăн кайса „карьерис", „тăшман" тесе кăшкăрашни сийенлĕ япала. „Ĕçе тĕплĕн пăхмасăрах комсомолтан кăларни, çынсем çине, ПСÇЛКС членĕсем çине чунсăр пăхни халăх тăшманĕсемшĕн кăна усăлă, мĕншĕн тесен, çавăн пек большевисăма хирĕçле ĕçсем комсомол ретĕнче ытлашши шанăççăрлăх сараççĕ, ПСÇЛКС-ран тĕрĕс мар кăларнисене тарăхтарса çилентереççĕ, а фашисăмăн троцкисла-бухаринла агенчĕсем сайра хутра кăна мар çавăн пек тарăхнă йулташсене вăштах çаклатса илеççĕ те хăйсем хыççăн тăшмансен лачакине сĕтĕрсе кĕреççĕ", тенĕ ПСÇЛКС Тĕпкомĕн мартри Пленумĕн решенийĕнче.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн мартри Пленумĕ комсомолран кăларнă чухне тунă йăнăшсене тÿрлетес пирки йышăннă решенине комсомол райкомĕсен, пуçламĕш организацисен тĕплĕн сÿтсе-явса, тивĕçлĕ вывод тумала. Ĕçре тунă йăнăшсене хăвăртрах тÿрлетсе, комсомол организацисен ĕçне темиçе хут лайăхлатмала, çамрăксене большевикла воспитани парассине тивĕçлипе организацилемеле.

Револљуцилĕ сыхăлăха тата çÿлерех çĕклесе тăшман йулашкийĕсемпе малашне те хайаррăн кĕрешсе пырса, вĕсене тĕпĕ тымарĕпех пĕтермеле.

Италипе Германи çарĕсем Испанире

ПАРИЖ, мартăн 14-мĕш. (ТАСС) Еспаљ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Испанин правителстви çыннисем, Испанири хĕвелтухăç фронтĕнчи наступлени пуринчен ытла Итали çарĕсемпе пулса пырать, тесе паллă тăваççĕ. Испанири хĕвелтухăç фронтĕнчи пăлхавçăсен халљхи çар операцийĕсемпе йертсе пырасси пĕтĕмпех италљянцăсен аллинче тăрать. Франко генерал Итали командованинче хăйĕн представителне Давила генерала çеç тытса тăрать. Наступленисенче пулакан йышлă мар Испани чаçĕсем пĕтĕмпех хăйсен ĕçĕсенче Итали дивизисен командованине пăхăнса тăраççĕ.

ПАРИЖ, мартăн 14-мĕш. (ТАСС). Еспаљ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Пасахеса (Испанин çурçĕр йенчи Сан Себастьян çывăхĕнче) йулашки кунсенче пĕтĕмпе пекех нимĕçсенчен тунă моторизациленĕ чаçсем, нумай шутлă полевой тата зенитлă артиллерин батарейĕсем тата инженерсен çарĕсем пынă. Çак чаçсен офицерĕсем ÿççăнах Германи çарĕн формине тăхăнса çÿреççĕ.

Герой-папанинцăсем Ленинградра

Портри митинг

Герой-папанинцăсем тăван совет çĕрĕ çине таврăннине Ленинградри ĕççыннисем хаваслă хумханупа кĕтнĕ. Ленин хулин урамĕсене, площчĕдĕсене, çыран хĕрринчи урамĕсене, кĕперсене, пĕтĕм халăхăн пысăк праçникĕ чухнехи пек, плакатсемпе, лозунгсемпе, хĕрлĕ йалавсемпе, Çурçĕр полюсне кĕрешсе илекен мухтавлă паттăрсен портречĕсемпе илемлетнĕ.

Урамсенче калама çук пысăк хускану.

Кăнтăрла 3 сехет тĕлне порт патне рабочисемпе служăщисен, Хĕрлĕ Çар чаçĕсен, краснофлотцăсен, студентсен, шкул ачисен нумай çынлă делегацийĕсем пухăнма пуçланă.

Порта кĕнĕ çĕрте—совет халăхĕн геройла çĕнтерÿвĕсене чĕрĕ вăй парса хавхалантарса пыраканĕн Сталин йулташăн калама çук пысăк портречĕ.

Нева йуханшывĕн гранитлă çыранĕ хĕррине пиншер ĕççыннисем пухăннă. Çынсен пуçĕсен хумханса тăракан тинĕсĕ çийĕн—партипе правителствă руководителĕсен, Папанин, Кренкел, Ширшов, Федоров портречĕсем, саламлă лозунгсем çырнă хĕрлĕ-хăмач тăрăхĕсем. Хĕрлĕ Çар бойецĕсен речĕсем тÿп-тÿррĕн те йĕркелĕн тăсăлса тăраççĕ. Хĕрлĕ йалавсемпе илемлетнĕ трибунă умĕнче — хисеплĕ хурал.

Пурин те куçĕсем хĕвеланăçнелле тинĕс çине пăхаççĕ...

Йулашкинчен, тинĕс каналĕнче „Йермак" килни курăнать...

Карап сăмси çинче легендарлă геройсен кашнийĕх пĕлсе тăракан кĕлеткесем уççăн курăнаççĕ. Папанинцăсем çумĕнче —пăр комиссарĕ Отто Йулљйевич Шмидт.

„Йермак" хыçĕнчен гавање „Мурманец" кĕрет. Гигант-пăрçĕмĕрен çумĕнче вăл тĕпренчĕк пек пĕчĕккĕ курăнать. „Мурманцăн" паттăр, хăйсен пурнăçĕшĕн шикленме пĕлмен командине Ленинград çыннисем калама çук ăшшăн саламлаççĕ.

16 сехет те 20 минутра пăрçĕмĕрен çинчен пристăњ çумне пырса çыпçăнма канатсем пăрахаççĕ. Оркестрсем кĕрлеççĕ. Сывлăх сунса, саламласа каланă сăмахсем çĕнĕрен те çĕнĕрен янраса çĕкленеççĕ.

Пĕлĕт çинче хăвăрт вĕçекен самољотсен ескадрили килсе курăнать. Çĕршыв хăйĕн хăйулă ывăлĕсене çĕр çинчен, шыв çинчен, сывлăшран саламлать. Папанинцăсем килни çинчен радио пĕтĕм тĕнчене хыпар сарать...

...Папанин йулташ хăйĕн картусĕпе саламлăн сулкалать.

— Сывă-и, йулташсем, сывă-и, хаклă çынсем!—савăнса хумханса кăшкăрать вăл.

... Çыран çине парадлă трап антараççĕ. Оркестрсем аслати пек кĕрленĕ майăн, оваци тата „урра" кăшкăрни тăвăл пек кĕрлесе тăнă май Иван Дмитриевич Папанин пуринчен те малтан тăван çĕр çине ура пусать. Ун хыççăн—Ернст Теодорович Кренкел, Петр Петрович Ширшов, Йевгений Константинович Федоров. Вĕсем çак тĕлпулупа хумханни чылайах палăрать.

— Акă вăл, йулашкинчен, совет çĕрĕ!.. — тесе кăшкăрса ярать Папанин.

ПСК(б)П Ленинград хула комитечĕн секретарĕ Кузнецов йулташ тата Ленинград совечĕн председателĕ Петровский йулташ Арктикăн мухтавлă геройĕсене ыталаççĕ, Сталин заданине çитĕнÿллĕн пурнăçа кĕртнипе, тăван çĕршыва таврăннипе саламлаççĕ.

Папанин, Кренкел, Ширшов, Федоров, Шмидт, Кузнецов, Петровский, ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕсем — академик Байков, Богданов, Сметанин, Смирнов, Алексей Толстой тата ыттисем те трибунă çине хăпараççĕ. Çак вăхăтра халăх нумайччен чарăнмасăр алă çупать.

Петровский йулташ ПСК(б)П Ленинград обкомĕпе хула комитечĕ йачĕпе, Ленинград облĕçтăвкомĕпе Ленинград совечĕ йачĕпе, Ленин хулинчи пĕтĕм ĕççыннисен йачĕпе, Çурçĕр полюсне кĕрешсе илнĕ хăйулă паттăрсене саламлать.

Петровский йулташ, герой папанинцăсен йачĕпе пухăннă митинг уçăлнă, тесе пĕлтерет.

И. Д. Папанин, Е. Т. Кренкел, П. П. Ширшов, Й. К. Федоров йулташсем хĕрÿлĕ сăмахсем тухса калаççĕ.

Митинга хупса, Петровский йулташ папанинцăсене Ленинградри большевиксен руководителĕ Андрей Александрович Ждановран салам калать.

Митинг пĕтет. Кĕтсе илекен çынсем тачă унка пек çавăрса илнĕ папанинцăсем машинăсем патне пыраççĕ. Вĕсене чечексем айне тăваççĕ.

Чĕрĕ чечексен çыххисемпе витĕннĕ автомобилсем пĕрин хыççăн тепри суту-илÿ порчĕн хапхинчен тухаççĕ. Геройсене хирĕç хыттăн „урра" кăшкăрни янраса пырать. Машинăсем хуллен иртсе пыракан проспектсем çинче çĕршер пин ленинградцăсем. Сывлăх сунса, саламласа çырнă тĕрлĕ тĕслĕ хут листисем балконсемпе чÿречĕсенчен çăмăр пек тăкăнаççĕ...

... Хулара праçник чухнехи пек шавлани-кĕрлени нумайччен лăпланаймасть...

(ТАСС).

Салам, тăван çĕршывăмăр!

Салам, хамăрăн хăватлă тăван çĕршывăмăр!

Епĕр хамăрăн аслă халăха, большевикла партин Тĕп Комитетне, Совет Правителствине, çулпуçăмăр та тусăмăр Сталин йулташа чĕрери тарăн туйăмпа тав тăватпăр. Пире куçса çÿрекен пăр çинчи експедицине ярса, вĕсем пире калама çук пысăк ĕç шанса пачĕç. Пирĕн çине аслă чыс—çĕр чăмăрĕн халиччен нихăçан та çын пырса кĕмен пушă облăçĕсене историре чи малтан сăнаса тĕпчес чыс ÿкрĕ. Халиччен тĕпчемен крайра нумай сăнавсем туса, епĕр хамăра пирĕн пĕтĕм хăватлă тăван çĕршывăмăр сăнаса тăнине епĕр кашни минутрах туйса тăнă, ку ĕнтĕ пире иксĕлми вăй-хăват парса тăчĕ, çутçанталăкăн хайар вăйĕсене хирĕç кĕрешме чĕрĕ вăй парса хавхалантарса тăчĕ. Çурçĕр полюсĕн шартлама сиввисемпе çилтăманĕсем пирĕншĕн хăрушă пулман. Тăван çĕршыв йуратнипе тăрăшни, хамăрăн аттемĕр, тусăмăр тата учителĕмĕр Сталин йулташ йуратни, вăл пирĕншĕн тăрăшни пире ăшăтса тăчĕ.

Салам, аслă тăван çĕршывăмăра! Халиччен пулман çулçÿревре есĕ пирĕншĕн, „Çурçĕр полюсĕ" станцинче хĕлкаçакансемшĕн, çул кăтартса пыракан çутă çăлтăр пек йалкăшса çуталса тăтăн. Епĕр санпа, тĕлĕнмеле чаплă совет çĕршывĕ, уйрăлми çыхăнса тăнă. Пирĕн чĕресем пĕтĕм халăх чĕрисемпе пĕр кĕвĕллĕн тапса тăнă.

Çапла ĕнтĕ, епĕр Ленинградра—совет çыранĕ çинче, хамăр патра, килте. Ленин хулипе, совет халăхĕпе хĕрÿлĕн тĕлпулнипе чĕререн хумханса кайнăскерсем, епĕр хамăрăн пĕтĕм вăй-халăмăра, кирлĕ пулсан пурнăçăмăра та, хамăр тăван çĕршыв мухтавĕшĕн, аслă Сталин мухтавĕшĕн парас кăмăлпа çунса тăратпăр.

Папанин, Ширшов, Кренкел, Федоров.

Ленинград, мартăн 15-мĕш (ТАСС).

Папанинцăсен биографине вĕренетпĕр

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Епĕр, вăтам шкулта тата туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем, кашни кунах уроксем пĕтнĕ хыççăн политинформацисем туса ирттеретпĕр. Вăл информацисенче куçса çÿрекен пăр çинчи „Çурçĕр полюсĕ" станцинчи полљар тĕпчевçисен, паттăр папанинцăсен—Папанинăн, Ширшовăн, Кренкелĕн тата Федоровăн чаплă ĕçĕсене тата вĕсен биографийĕсене вĕренетпĕр.

А. Максимов.

Ÿкерчĕк çинче: Çурçĕр полюс паттăрĕсем „Таймыр" тата „Мурман" експедици участникĕсене кĕтсе илеççĕ. Йа. Халип фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото)

Сире çĕр чăмăрĕ çинчи кирек хăш вырăна та илсе çитерме хатĕр

Хаклă йулташсем—Папанин, Кренкел, Ширшов тата Федоров!

Сире епĕ хамăн хĕрÿлĕ, тăванла, большевикла салама ярататăп. Есĕр, Арктикă центрĕнчен пирĕн çĕршывăн столицине, çĕнтерекенсем пулса таврăнаттăр. Есĕр совет çыннисене, коммуниссен парти вĕрентсе ÿстернĕ тата пирĕн учителпе аттемĕр, аслă Сталин чĕрĕ вăй парса хавхалантарнă совет çыннисене тивĕçлĕ хăйулă та паттăр ĕç турăр. Сире Çурçĕр полюсне илсе çитерме тивĕçлĕ пулнăшăн епĕ хама вĕçĕмсĕр телейлĕ тесе шутлатăп.

Сирĕнпе пĕтĕм çĕршыв мухтанса савăнать тата çĕршывпа пĕрлех епĕ те сирĕнпе—хăйулă совет паттăрĕсемпе—мухтанса савăнатăп. Полюсра вунултă кун хушши сирĕнпе пĕрле пурăннă хыççăн, епĕ—çав кунсем питĕ час иртрĕç, епĕ сирĕнпе пĕрле пĕтĕм тăхăр уйăх хушшийĕх пулма пултараймарăм, тесе çеç шеллеме пултаратăп. Експедици вăхăтĕнче епĕр татах та ытларах паллашса хăнăхрăмăр, пĕр-пĕрне татах та ытларах йуратрăмăр. Партипе правителствă сире ăçта та пулин хĕлкаçма кайма хушсан, сире çĕр чăмăрĕ çинчи кирек хăш вырăна та илсе çитерме хатĕр епĕ.

Салам сире, хаклă туссем! Сире ыталама хĕрлĕ столицăра мĕлйуншарăн кĕтеççĕ.

Сирĕн М. Водопьянов.

(ТАСС).

Совет халăхĕ паттăр папанинцăсене саламлать

Совет халăхĕн паттăр ывăлĕсем—папанинцăсем —Ленин хулине, тăван совет çĕршывне çитни çинчен радиопа телеграф савăнăçлă хыпар сарсанах, çĕршывăн пур кĕтесĕнчен те геройсем патне саламсем килме пуçланă.

Петрозаводскри суйлавçăсем хăйсен ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ Иван Дмитриевич Папанин патне çапла çыраççĕ:

„Сире, Иван Дмитриевич пирĕн мухтавлă депутата тата сирĕн чаплă йулташусене—Ширшова, Кренкеле, Федорова, полюса хăйулăн парăнтаракансене, социалисăмлă тăван çĕршывăн шиксĕр ывăлĕсене, пайан, совет çĕрне лайăххăн таврăннă кун, Онежск заводĕнчи рабочисем тата Петрозаводскри пĕтĕм ĕççыннисем большевикла хĕрÿлĕ салам йараççĕ".

„Сирĕн шиксĕрлĕх тата хăвăра пĕр шеллемесĕр ĕçлени, есĕр тăван çĕршыва, аслă Сталина чĕререн йуратни—мĕлйун-мĕлйун Совет патриочĕсене хăйсен социалисăмлă тăван çĕршывĕн мухтавĕпе чапĕшĕн йаланах çĕнĕ хăйулă та паттăрла ĕçсем тума чĕнĕç. Сирĕн паттăрла пример çинче нумай-нумай ăрусем вĕренсе ÿсĕç",—тесе пĕлтереççĕ хăйсен çырувĕнче Тулари хĕçпăшал тăвакан заводри рабочисем.

Уралмаш заводĕнчи стахановцăсем папанинцăсене саламласа çырнă хăйсен çырувĕнче çапла çыраççĕ:

„Иртнĕ çулта, сирĕн експедицин самољочĕсем çурçĕреле çул тытсан, пирĕнтен кашнийĕх—çĕнтерÿ большевиксенче пулать! тесе шанса тăнă.

Халĕ епĕр сирĕнпе пĕрле мухтансах çапла калама пултаратпăр:—етемлĕх мĕн çинчен ĕмĕтленни—пурнăçа кĕчĕ; Сталин вĕрентсе ÿстернĕ, пиçĕхтернĕ çынсем Советсен çĕршывĕн çĕнтерÿлĕ йалавне полюса илсе пырса лартрĕç".

(ТАСС).

Пайан папанинцăсем Мускава çитеççĕ

ПАЙАН, МАРТĂН 17-мĕшĕнче, 16 СЕХЕТРЕ ПАПАНИН, КРЕНКЕЛ, ШИРШОВ ТАТА ФЕДОРОВ ЙУЛТАШСЕМ МУСКАВА ÇИТЕÇÇĔ. ВĔСЕНЕ ЛЕНИНГРАД ВОКЗАЛĔНЧЕ КĔТСЕ ИЛЕÇÇĔ. (ТАСС).

Папанинцăсене чĕререн савса саламлатпăр

ПАТĂРЙЕЛ. Совет çĕршывĕн тăвата паттăрне—полљар тĕпчевçисене Патăрйелĕнчи ĕççыннисем хаваслăн саламлаççĕ.

Епĕр Патăрйелĕнчи педучилищăра вĕренекенсем папанинцăсен пысăк ĕçĕсемпе хавхаланса, вĕренÿ çулне вĕсем пекех „отлично" тата „хорошо" паллăсемпе вĕренсе тухма çине тăрсах тăрăшатпăр.

М. Каримов.

АРКТИКĂ ГЕРОЙĔСЕНЕ МУХТАВ!

Наступленин малти ретĕнче

И. Н. Урванцев

Çурçĕр полюсĕ, ăна сăнаса вĕренесси Совет çĕршывĕшĕн нихăçан та рекордсем тăвассишĕн, тĕлĕнмеле хыпар сарассишĕн тăрăшмалли йăпала пулман. Çурçĕр полюсне сăнаса вĕренес ĕçе ССР Союзĕнче Çурçĕр тинĕс çулне—калама çук пысăк шыв çулне алла илессипе тӳррĕмĕнех çыхăнса тăракан проблемăна татса парас шутпа тытăнчĕç. Вăл çул тен чери икĕ калама çук аслă бассейна—Атлантика океанĕпе Лăпкă океана çыхăнтарса тăрать.

Çурçĕр тинĕс çулĕ иртсе пынă çĕрти çырансем хĕррипе тата Пăрлă океанри утравсем çинче совет влаçĕ полярта аслăлăхпа тĕпчев станцисем пит нумай туса лартрĕ. Вăл станцăсен ĕçĕсем çине тĕренсе тăрса, Çурçĕрти пăрлă океанри пăрсем хушшипе ишсе çӳрес условисене вĕренсе пĕлес ĕçре, пăрсем кусса çӳренине, тинĕсен йухăмĕсене сăнаса вĕренес ĕçре совет аслăхĕ нумай мала утрĕ.

Сапах та, çырансем тăрăх тата утравсем çинче чаннипе илсе пăхсан Пăрлă океанăн хĕррипели пайĕнче, станцисем туса лартни Çурçĕр тинĕс çулĕн проблемине пĕтĕмĕшпех татса параймаст-ха, ăна пĕрмайах анаçлăн ĕçлесе тăракан шыв çулĕ туса хума май параймаст. Полюр бассейнĕн полюсна çывăхрах тăракан пайне, центрти пайне халиччен те-ха тĕпчесе вĕренмен пулнă. Çавăнпа та Çурçĕр тинĕс çулне алла илес ĕçре тинĕсен хĕррипели пайĕсенче полюр станцийĕсем туса лартнă хыççăн тумалла пулнă ĕç вăл—унăн центрти, полюс çывăхĕнчи анлă вырăнĕсене сăнаса вĕренесси пулса тăнă. Ку проблемăна татса парас ĕçе пирĕн çĕршывра планлă йĕркепе, организацилĕн тытăнчĕç.

9 уйăх хушшинче тăватă герой хаклăран та хаклă тĕпчевсем, аслăлăх сăнавĕсем туса ирттерчĕ. Арктикăн йулашки участкин çекречĕ ĕнĕ хупăрласа тăнă пĕркенчĕке уçнă, çавăнпа ĕнтĕ епĕр Полюр бассейнĕнчи, тинĕс çулĕн проблемипе вĕçне çитиех татса парасси патне çывхартамăр.

Папанинпа унăн йулташĕсен мухтавлă ĕçĕ пĕртен пĕрре çеç пулмĕ, унăн пирки иккелемели çук. Папанинцăсем, вырăнне çĕршыв аслăлăхпа-тĕпчев ĕçĕн çĕнĕ отрйачĕсене йарĕ. Çурçĕр полюсĕн районĕсенче тата полюс çывăхĕнчи анлă вырăнсенче майĕпен-майĕпен пĕрмайах ĕçлесе тăракан аслăлăхпа тĕпчевлĕ полюр станцийĕсем нумай туса лартассине организацилĕç, вĕсем унта халĕхи вăхăтра Полюр тинĕсĕн хĕррипе туса лартнă станцисем пекех нумай пулĕç. Арктикăн пĕтĕм талкăшне нумай вăхăт хушши анлăн сăнаса тĕпчени хыççăн, пăрсем чăмăртаннин, куççа çӳренин саккунĕсене, Полюр бассейнĕнчи йухăмсен, çанталăкăн саккунĕсене епĕр пĕтĕмĕшпех те туллин вĕренсе çитĕпĕр.

Ку вара, хăй вырăнĕнче, Çурçĕр тинĕс çулне татăклăнах алла илес ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрĕ, пысăк усă кӳрĕ.

Çурçĕр тинĕс çулĕн, грузсене нумай хисеппе, йӳне лармала туттарса çӳремели çулăн, проблемине татса парас ĕçре епĕр пĕр çак тĕлleve кăна тытмастпăр. Вăл çакăнпа пĕрлех тата Совет Çурçĕрне промышленнăç тĕлĕшĕнчен алла илмели средствă пулса тăрать.

Аслăлăх тĕпчеве-сăнавĕсем, вĕсем çителĕклĕ пуласси̇нчен айакра-ха, çапах палăртса пачĕç: Совет Арктикин, субарктикин чĕр тавар ресурсĕсем калама çук пысăк. 1937 çулхи июлĕн уйăхĕнче Мускавра пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери геологи конгресĕ хутмали йăпаласен запасĕсене шута илнĕ чухне, Арктикăра, субарктикăра 600 мĕлйард тоннă çĕркăмрăкĕ пур иккенне палăртнă. Арктикăн çурçĕр-хĕвелтухăç йенчи çĕресенче—Лепаран хĕвелтухăç йеннеле Чукоткă çурутравĕ патне çитиччех—нумай шур тăхланлă вырăнсем пуррине палăртнă. Çав территорирех тата хура тăхлан, кĕмел, цинк, наркăмăш тата ытти рудасем пит нумай выртакан вырăнсем тупнă. Йенисейпе Ленă хушшинче, Таймыр çурутравĕн районĕнче нефть паракан калама çук пысăк вырăн пуррине палăртнă. Колский çурутравĕнче питĕ нумай нефеминлă-апатитлă руда вырăнĕсем, сахал тĕлпулакан никеллĕ, тимĕрлĕ тата ытти металлсемлĕ çĕрсем тупнă.

Большевиксем Арктика пуйанлăхне халапри пек хăвăрттăн алла илсе пыраççĕ. Колский çурутравĕ çинче сăрт-тусенчи пуйанлăхсенчен кирлĕ йăпаласем тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен промышленнăç хăвăрт та вăйлăн ӳссе пырать. Хибины районĕнче Союзри чи пысăккисенчен пĕри пулса тăракан сăрт-ту-руда комбиначĕ туса лартнă, унта çав комбината кирлĕ йăпаласем хатĕрлекен фабрикă пур. Социалисăмла çĕнĕ хула—Кировск ӳссе ларнă, халь унта темиçе вунă пин çын хисепленет Йенисей тинĕсĕ йухса тухакан вырăнта пăхăрпа никĕл рудисене кăларас, шăратас тĕлĕшпе ĕçлемели калама çук пысăк комбинат тăваççĕ. Йенисей çинче, Игаркă шывĕ йухса кĕрекен вырăнта полюрти калама çук пысăк порт туса лартнă. Вăл портпа ретĕнех хăма çуракан завод тата ытти пулăшулă предпрйатисем туса лартнă. Унта çулсеренех, навигаци тапхăренче, вуншар совет карапĕсемпе йутçĕршыв карапĕсем пыраççĕ.

Совет çыннисем хăйар Арктикă çине çĕнтерӳлĕ наступлени туса пыраççĕ. Епĕр çак наступленин чи малти позицийĕсем çинче Сталин пăхса çитĕнтернĕ мухтавлă паттăрсене—Папанина, Ширшова, Кренкеле, Федорова куратпăр. Аслă Сталин вăй парса хавхалантарса тăнăскерсем, вĕсем прогресс ырлăхĕшĕн, аслăлăх ырлăхĕшĕн, пĕтĕм етемлĕх ырлăхĕшĕн нихăçан пулман мухтавлă та чаплă ĕç турĕç.

(ТАСС).

Йевгений Константинович ФЕДОРОВ

22 çулхи çамрăк, Ленинградри университетăн физикăпа математикă факултетне вĕренсе пĕтерсе, çĕр магнетисăмне тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе ĕçлекенĕн специалнăçне илсе, Йевгений Федоров Франц-Иосиф Çĕрĕ çине тухса кайнă.

Арктикăра малтанхи хут хĕл каçни Федоровăн пĕтĕм пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăннă. Кунта вăл полярти ĕçри чи пирвайхи хут хутшăннă, кунта Ленинпа комсомол ротне кĕнĕ, кунта пирвайхи хут Папанинпа,—унчухне вăл хĕл каçакансен начальникĕ пулнă,—паллашнă. Вĕсен иккĕшин хушшинче хĕрӳлĕ туслăх пуçланса кайнă.

Арктикăн хăйар условийĕсенчи ĕçсем çак çамрăк талантлă учонăйра хăйулăх пахалăхĕсене, нимĕнле йăвăрлăхсем умĕнче те кайала чакмала мар пахалăхсем туса ӳстернĕ. Унпа халиччен етемлĕх историнче курман çĕре—полярă хĕл каçма кайма тапрансан, Папанин çак çамрăк учонăй çинчен çакăн пек хак панă:

—Федоров—хăйĕн ĕçне лайăх пĕлекен çын, çурçĕр пуçаруçи, чаплă йулташ,—тенĕ.

Партипе правителствă, пĕтĕм аслă совет халăхĕ шанса панине Йевгений Константинович ĕçпе кăтартрĕ. 274 кун хушши полярти кусса çӳрекен пăр çинче хĕл каçнă вăхăтра вăл аслăлăх йенчен пысăк ĕçсем турĕ. Федоров туса ирттернĕ гравитацилле сăнавсем тата магнита сăнаса пĕлес тĕлĕшпе тунă ĕçсем аслăлăхшăн хаклăран та хаклă ĕçсем пулса тăраççĕ. Тĕпчесе вĕренĕ çав ĕçсем тăрăх Арктикăн тĕпчесе вĕренмен вырăнĕсем çинчен магнит карттине тумала. Çав карттă тăрăх лотчиксем хăйсен самолочĕсене шанчăклăнах Çурçĕр полюсĕ урлă илсе пыма пултараççĕ. Штурмансем, çак карттăпа усă курса, суднăсене Çурçĕрти Аслă тинĕс çулĕ тăрăх Мурманскран Владивостока пĕр хăрамасăр илсе пыма пултараççĕ.

Кусса çӳрекен пăр çинче паттăрлăх кăтартнăшăн, социалисăмлă тăван çĕршыв умĕнче калама çук пысăк тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн 1937 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнче правителствă Йевгений Константинович Федорова пысăк наградăпа—Ленин орденĕпе наградăланă. Киргиз республикĕнчи Наукатск суйлав округĕнчи ĕççыннисем ăна, тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлне, ССР Союзĕн Верховнăй Советне хăйсен депутачĕ туса йанă.

Йевгений Федоров ĕçлĕ çемйере çуралнă. Ача чухнехи пурнăçне вăл Атăл çинче, Горький хулинче ирттернĕ, унта тăван çĕршыва çакăн пек чаплă ывăл ӳстерсе панă старикçем халĕ те пурăнаççĕ.

Геройла папанинцăсене кусса çӳрекен пăр çинчен илсе тухни Минскран Владивостока çитиччен чи хумхантаракан калаçусем пулса кайнă кунсенче, Ленинграда Федоров йачĕпе тата унăн арăмĕ Анна Викторовнă йачĕпе те ăшă кăмăлпа çырнă çырусем вуншарăн пыра-пыра кĕнĕ. Пачах палламан, анчах та тăван çĕршыва пĕрлĕхлĕ пулса йуратса тăракан çывăх çынсем сывлăх сунса саламлаççĕ, савăнса хавасланаççĕ.

(ТАСС).

ÇУРÇĔР ПОЛЮСĔНЧЕ

Ӳкерчĕк çинче: И. Д Папанин апат çийет.

М. Тройановски фото ӳкерчĕкĕ.

Петр Петрович ШИРШОВ

Петр Петрович Ширшовăн, Совет çĕршывĕн виçĕ орденне илнĕ çамрăк учонăйăн ача чухнехипе йашă чухнехи вăхăчĕ Днепропетровскра иртнĕ. Унта вăл вăтам шкулта вĕреннĕ, унтах вăл халăха çутта кăларас ĕç институчĕн биологи факултетĕнчен вĕренсе тухнă.

Институтран вĕренсе тухнă хыççăн, Ширшов Одессăра, хăй çуралнă Днепропетровскра, Ленинградра ĕçлет, унтан вара çурçĕрелле „кусса пырасси" пуçланать. Çамрăк учонăй Ленинградран Колский çурутравĕ çине кайать. 1931 çулта Ширшов Çĕнĕ Çĕр çинче хĕл каçать. Унтан—пĕтĕм çурçĕр тинĕс çулĕ тăрăх ишсе тухнă „Сибирйаков" çинчи историле рейс.

Петр Ширшов çав чаплă поход вăхăтĕнче паттăрлăх палăртнăшăн, ăна правителствă Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалавĕн орденĕпе наградăланă.

Пĕр çул та иртмен—вăл каллех експедицире—„Челюскин" çинче.

Мухтавлă карапăн портне пăрсем тăрăнса шăтарнă хыççăн, Ширшов кайутăна виркĕнсе кĕрет, пĕтĕм аслăлăх материалĕсене илсе тухать.

Пăр çинчи Шмидт лагерĕнче Ширшов калама çук пысăк ĕç туса ирттернĕ.

Унта паттăрлăх палăртнăшăн Петр Петрович правителствăран иккĕмĕш пысăк та чаплă наградă—Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илет. „Ансăртла" пăр çинче пурăнас опыт Ширшовăн ĕнтĕ пулнă. Çурçĕр полюсĕ патĕнчи иккĕмĕш—„планласа хунă"—пăр çинче пурăнаканнисенч н пĕри Петр Ширшов пулса тăниччен нимĕн тĕлĕнмели те çук, вăл çавăн пекех пулмала пулнă.

Ширшов хĕл каçмашкăн нумай вăхăт, çине тăрса хатĕрленет. Вăл астрономи курсне вĕреннĕ, медицинăна вĕреннĕ. „Çурçĕр полюсĕ" ĕçе тытăннăранпа иккĕмĕш уйăх пуçланнă чух правителствă ăна Ленин орденĕпе наградăланă.

Хăйне ССРС Верховнăй Совечĕн депутатне суйланă днепропетровцăсем патне Ширшов хăйар Арктикăри кусса çӳрекен пăр çинчен çапла çырнă:

„Аслă тăван çĕршывăмăрти ĕççыннисем çапла шаннине, парти шаннине чыслăн тӳрре кăларассишĕн пĕтĕм вăй-халăма, пĕтĕм пурнăçăма парап тесе епĕ сире сăмах паратăп.

Епĕ сире сисĕмлĕ пулма, тăван çĕршыв тăшманĕсем тĕлĕшĕпе—ирсĕр троцкисла-бухаринла фашисла кайашсен тĕлĕшĕне, вĕсемпе кирек аçта тĕлпулма тивсен те, пĕр шеллев ĕр пулма сăмах паратăп. Тăшман пирĕн чикĕсем çине алă çĕклеме хăйсассăн, епĕ Арктикăн пăрлă хирĕсем çинче кăна мар хăйулă пулăп тесе сăмах паратăп".

Çакăн пек ĕнтĕ Арктикă геройĕн, совет аслăлăх геройĕн—Петр Петрович Ширшовăн сăн-пичĕ.

(ТАСС).

Ернст Теодорович КРЕНКЕЛ

„Епĕ практикăпа ĕçе йуратакан çын. Канцелйаринче епĕ кичемлĕ пулнипе вилнĕ пулăттăм, вара мана музыкăсăрах тата сăмахсем тухса каламасăрах чăпсăрах пытарнă пулĕччĕç".

Çапла калать хăй çинчен радист Ернст Кренкел. Хăйĕн кĕске—34 çул хушшинчи пурнăçĕнчен 14 çулне Кренкел Арктикăн усал та хăйар условисенче йăвăр, хăйне шеллемесĕр ĕçленĕ çĕре панă.

Револющин малтанхи çулĕсенче 17 çулхи Кренкел радиотелеграфистсен кĕске срукла курсне лекет. Ернст чи пултарулă вĕренекенсенчен пĕри пулнă.

20 çулхи çамрăк, Кренкел 1924 çулта чи пирвайхи хут Арктикăна кайать. Çĕнĕ Çĕр çинче Кренкел радиотехникăпа пĕр çăмăлттайланмасăр, мухтанмасăр тата лăпкăн ĕçленĕ, пăрсене касnă, кăмакана вут хунă, урай çунă. Тата вĕреннĕ. Нумайччен тата тăрăшса вĕреннĕ. Арктикă çамрăк çынăн ирĕкне çирĕплетнĕ, ăна çирĕп те хăйулă тата çутçанталăкăн сук кăр вăйĕсене çĕнтерме тăрăшакан çын туса ӳстернĕ.

Хĕрлĕ Çарти службă хыççăн ывăнма пĕлмен Кренкел каллех Арктикăра.

Ширшовпа пĕрле Ернст Кренкел „Сибирйаковăн" Çурçĕрти аслă тинĕс çулĕ тăрăх тухнă походĕнче хутшăнса ĕçлет. Çак походра пулнисен паттăрла ĕçне тивĕçлипе хакланă. Походра пулнисен шутĕнчен Кренкеле те Ĕçлĕх Хĕрлĕ йалавĕн орденĕпе наградăланă.

...Челюскинцăсен легендарлă епопейĕ. Ернст Кренкел çавăнта хутшăнса ĕçлени, унта вăл хăйне пĕр шеллемесĕр тата ырми-канми ĕçлени, „Челюскин" шыва путма пуçласан, вăл ун çинчен чи йулашкинчен тухни, челюскинцăсемпе çĕр хушшинчи çыхăнуна лайăх туса пыни—пĕтĕм тĕнчипе паллă пулса тăрать, Кренкелĕн кăкăрĕ иккĕмĕш орденпа—Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе илемленет. Часах Кренкел хĕлкаçма малтан Оловйанный сăмсахне, унтан—Домашний текен утрав çине кайать.

Ку вăхăт тĕлне Çурçĕр полюспе вĕçесси çинчен калаçу пуçланать. Çак шухăш Кренкеле пĕтĕмпех çавăрса илет. Вăл çак çутă ĕмĕтпе çеç пурăнать. Хĕл каçнă çĕртен пана радиограммăсем пурте: „полюса вĕçес килет, вĕçме тивĕçлĕ те",—текен шухăшпа тулнă.

Ĕмĕтленни пурнăçа кĕчĕ. Кренкел—кусса çӳрекен пăр çинче. Папанинцăсем пурăнакан пăрпа Пысăк Çĕр хушшинчи çыхăну пĕр кун та татăлмасть. Халăх, парти, правителствă халиччен курман хăйулă радисăн ĕçне пысăка хурса хаклаççĕ. Правителствă ăна Ленин орденĕпе наградăлать, халăх хăйĕн депутачĕ туса, ăна ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйлать.

Кренкел Арктикăна вуннăмĕш хут похода кайни халиччен историре пулман, кусса çӳрекен „Çурçĕр полюс" станцинче паттăрла хĕлкаçнипе вĕçленчĕ.

(ТАСС).

Совет културин чаплă çĕнтерӳвĕ

Профессор Р. Самойлович

Совет çĕршывĕн тăвата ывăлĕ хăйар Арктикăри çутçанталăкăн хăватлă вăйĕсене халиччен пулманла çĕнтернипе хавасланса киле телейлĕн таврăнаççĕ. Пирĕн пĕтĕм халăх, ватти-вĕттипех, хăйулă çынсене—Папанина, Кренкеле, Ширшова, Федорова чĕре тулли хавасланхпа кĕтсе илет, вĕсен йатне халь ĕнтĕ пĕтĕм тĕнче пĕлет. Папанинцăсем тунă çĕнтерӳ вăл совет културин чаплă çĕнтерӳвĕ пулса тăрать. Вĕсен хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр тунă хăйулă ĕçĕ Сталинла епохăна тивĕçлĕ.

Кусса çӳрекен пăр çинчен експедицин пахалăхĕ вăл аслăлăх йенчен çав тери хаклă материал тупнинче çеç мар. Папанинцăсем калама çук тимлĕн çине тăрса ĕçлени тĕлĕнтĕрсе йарать: вĕсем хăйсен ĕçне нимĕнле йăвăрлăхсене пăхмасăрах пурнăçа кĕртнĕ, çавнашкал йăвăрлăхсене сирсе йанă чухне ĕлĕкрех пулнă експедицисенчи çынсем час-часах вилни те пулкаланă.

Халь ĕнтĕ, мĕн пур йăвăрлăхсем хыçа тăрса йулнă чухне, вĕсен паттăр ĕçĕн малтанхи, кĕске итогĕсене тума пултаратпăр.

Центрти полюр бассейнине тĕплĕн сăнаса вĕренни геройла тăвата çынăн калама çук пысăк, тава тивĕçлĕ ĕçĕ пулса тăрать. Çурçĕр полюсĕ пек тата полюс çывăхĕнчи талкăшсем пек çӳлĕ широтăсене нихăçан та никам та тĕпчесе вĕренмен. Епĕр ĕнтĕ халь çак вырăнти шыв тарăнăшне, шыв тĕпĕнчи релиефсене тĕрĕс пĕлсе тăратпăр, унта пуçпулса тăракан шыв йухамĕсем çав релйефсенчен килеççĕ.

Папанинцăсем гидрологи йенчен тунă тĕпчевсем Атлантикăпа Çурçĕрти пăрлă океан хушшинче шыв улшăнса пыни пирки тăракан пит кирлĕ ыйтусене çутатса параççĕ. Пăрсем кусса пынине сăнаçан епĕр çакна куратпăр: пăрсен хăватлă йухмĕ Гренланди тинĕсне пысăк хăвăртлăхпа пырса кĕрет. Çакна папанинцăсем чи малтан палартса çирĕплетрĕç.

Çурçĕр полюсĕнче пурнăç пур-и? Çак ыйтува нумай вунçуллăхсем хушши сӳтсе йавнă. Халь ĕнтĕ епĕр çак ыйту çине „Çурçĕр полюсĕнче пурнăç пур" тесе ответлеме пултаратпăр.

Полюс районĕнчи метеорологилĕ йавленисене ку таринчен полюр çывăхĕнчи облаçсенче сăнанисем тăрăх çеç тавçăрса илме пулнă. Полюсра хăйĕнче никам та нихăçан та метеорологилĕ сăнавсем туман. Çак задачăна чи малтан пирĕн геройсем пурнăçа кĕртрĕç.

Тĕнчери аслăлăх валли мĕн тери хаклă ĕç тунине ăнланса илес тесен, Çурçĕр полюсĕ патĕнче пăр çинче пит йăвăр условисенче тунă ĕçсене çийелтен шутласа тухнипе те çителĕклĕ.

Тăвата хăйулă совет тĕпчевçи тăван çĕршыва чаплă çĕнтерӳ туса таврăнчĕç. Вĕсене пирĕн çĕршыври учонăйсем тивĕçлипех йышăнчĕç, ĕççыннисем хĕрӳлĕн йуратаççĕ. Папанинцăсен пысăк хăйулăхне пирĕн çĕршыв тивĕçлипех хакларĕ.

Çакăнтах епĕр хамăрăн герой-лотчиксен хăйулă та йĕркелĕ операцийĕсене аса илмесĕр тăма пултараймастпăр, çав лочиксем Çурçĕр полюсне чаплăн вĕçсе кайса, унта тăвата паллă папанинцăсене антарса хăварчĕç. Çак пĕтĕм чаплă епопейă „Мурманпа" „Таймыр" çинчи хăйулă морйаксен пахаĕçĕпе вĕçленсе çитрĕ, вĕсем папанинцăсене пăр çинчен илес хисеплĕ задачăна пахан пурнăçа кĕртрĕç.

Герой-полюрниксене, Сталинла епохăри геройсене салам!

Хĕвелтухăç-Çĕпĕр тинĕсĕ, „Садко" борчĕ.

(ТАСС).

Иван Дмитрийевич ПАПАНИН

Иван Дмитрийевич Папанинăн биографийĕ паха та интереслă. Унăн ашшĕпе аслашшĕ патша флочĕн матросĕсем пулнă. Иван Папанин та матроса кайнă. Вăл флотра пурăннă çулсем—рабочисемпе хресченсем ирĕкшĕн, социалисăмшăн кĕрешнĕ аслă çулсемпе пĕр тĕле килсе тухнă.

Иван Дмитрийевич граждан вăрçин пур вăхăтне те фронтсенче ирттернĕ, Совет влаçĕшĕн пĕр шиксĕр кĕрешекенĕ, револющин паттăр та хăйулă ывăлĕ пулнă.

Иван Дмитрийевич Врангел тылĕнче, новстанчествă отрйадĕнче пулнă вăхăтри пĕр ĕç çинчен каласа парăпăр.

... Папанина Крымран тинĕспе Новороссийска çитсе, унтан фронт командуйущчине пĕр питĕ кирлĕ донесенине пама Харькова вăрттăн кайма хушнă.

Иван Дмитрийевич, шхунăпа Крымран вăрттăн çăнăх илсе каякан контрабандистсенчен, хăйне совет çĕршывĕ çине илсе çитерме ыйтнă.

Папанина тĕттĕм трӳма персе чикнĕ. Шхунă, уçă тинĕсе тухсан, контрабандистсем: „хулăм большевикпа" мĕн тумала? тесе ыйту сӳтсе-йавма тытăннă. Ăна палуба çине илсе пынă та капитан умне тăратнă. Папанин хăйне хăй ним çинчен те шухăшламан çын пек кăтартса, контрабандистсем мĕн мĕн калаçнине хăраса итленĕ. Калаçасса тухарла калаçнă, Крымра çуралнă Папанин ку чĕлхене пĕртак пĕлнĕ. Контрабандистсен утамне ăна вĕлерсе çаратма хушнине Папанин илтнĕ. Большевикăн ичĕ çинче пĕр мускул та хускалман. Вăл кĕсйере выртакан револьвере çеç хытăрах чăрмантарнă. Папанин хăйĕн пурнăçне йӳнĕ хакпа парас мар тесе шутланă.

Матроссем хăйсен вĕлермели çынĕ патне вăраххăн çывхарса пынă. Çав вăхăтрах сасартăк суднă тĕпĕнче темскер хăралтатнă. Мотор шавĕ лăпланнă. Шхунă чарăннă. Суднă çинче тревога тапраннă.

Кĕçех мотор пăсăлни паллă пулнă. Йусама никам та пултарайман. Папанин йусама пулнă. Вăл çавăнтах, суднă аварийĕ вилĕмрен çăлма пултарнине шухăшласа илнĕ. Мотора йусасан, могора ман пек, Папанин пек, маçтăран пĕрмайах пăхас пулать, тесе Папанин паллăсемпе кăтартса пĕлтернĕ...

Çапла майпа вара Анатоли çыранĕсем хĕрне çитнĕ. Папанин çырана тухнă. Халь унăн Трапезунда, унтан Новороссийска вăрттăн каймала пулнă. Папанин çапла шухăшласа кăларнă, вăл кĕпине çурнă, пылчăкпа вараланнă, хăлхасăр чĕлхесĕр ыткалакан çын пек пулса совет чиккисем патнелле çуррăн утнă.

Иван Дмитрийевич 20 кун кайса Трапезунда, чĕркуççи айне çыхса хунă питĕ кирлĕ донесенине лайăх сыхласа аванах çитнĕ. Трапезундра Папанин катер шыраса тупса, вăхăта ним тăсмасăрах Новороссийска тухса кайнă. Катер Новороссийскăра пулас вырăнне Гаграна пынă пулнă. Унта шуррисем кĕрсе ларнă. Катер çине пеме тапратнă. Капитан хăранипе трӳма кĕрсе кайнă. Папанин катера хăй тытса пырса ним сийенсĕр уçă тинĕсе кăларнă. Кĕçех Новороссийскăн çутисем куранна пĕр так вăхăт иртсен Харьковра фронт командуйущчийĕ хăйĕн аллинче Папанин илсе килнĕ донесенине тытса та тăнă...

Иван Дмитрийевичăн кĕрешӳлĕ пурнăçĕнче çакăн пек ĕçсем темĕн чухлех пулнă.

Чи хăрушă вырăнсенче, тăшманăн шалти тылĕсенче—Папанин хăйĕн отрйачĕпе пырса кĕрсен, пур çĕрте те вăл тăшмана çапса çĕмĕрнĕ, Крыма шуррисенчен тасатнă.

Совет çĕршывĕ револющин шанчăклă ывăлĕн тава тивĕçлĕ паттăр ĕçĕсене тивĕçлипе хак панă: Папанина Хĕрлĕ йалав орденĕпе наградăланă.

Граждан вăрçи пĕтнĕ, Папанин мирлĕ ĕçе куçнă. Ăна Арктикă илĕртнĕ. Вăл Тихайа бухтăри хĕл каçакансен начальникĕ пулнă, унтан Челюскин сăмсахĕ çинчи полюр станцин начальникĕ. Папанин Франц-Иосиф Çĕрĕн мĕн пур архипелагне йытăсемпе çӳресе тухнă, хĕлкаçнă çĕрте хуçалăхпа аслăлăх ĕçне калама çук аван туса тăнă.

... Пĕрехинче Челюскин сăмсахĕ çинчи станци патĕнче уçăлса çӳренĕ вăхăтра, Папанин сăмсах çумĕпе пысăк талкăшпа нумай çулхи пăр ишсе пынине курнă.

Çак пысăк пăр çинче çурт туса лартас та ишес,—сасартăках шутланă Иван Дмитрийевич,—кун пек пĕр çул та, икĕ çул та кусса çӳреме пулать...

Çак вăхăтран вара илĕртекен тата хăйулă—чăрăр шухăш пуçмимине çирĕппĕн кĕрсе ларнă. Паха план ӳссе сарăлсах пынă. Ăна пĕлӳпе çирĕплетмеле пулнă. Иван Дмитрийевич çурçĕр полюсĕн вăрттăнлăхĕсем çинчен, Арктикăра пулнă мĕн пур паха експедицисем çинчен вĕçе-хĕррисĕр кĕнекесем вулать.

Ака ĕнтĕ ĕмĕт пурнăçа кĕчĕ. Папанина виçĕ хастарлă йулташĕсемпе пĕрле Çурçĕр полюсне йанă.

Иван Папанин пăр çинче пурăнса, шиксĕрлĕхĕн, хăйне-хăй тытма пĕлнин тата дисциплинăн примерне кăтартса пачĕ. Хĕлкаçакан хăйĕн йулташĕсемшĕн Папанин начальник çеç мар, тата вĕçĕмсĕр тăрăшакан тус та.

Експедицине вĕçлесе çитерне. Папанинсем тунă епопейă совет çĕршывĕн историне, совет аслăлăхĕн историне унăн чи чаплă страницисенчен пĕри пулса кĕрсе йулать.

ССРС Верховнăй Совечĕн депутачĕ Совет Союзĕн Геройĕ Иван Дмитрийевич Папанин—çак пит те чаплă, хăйулă çын, большевикла ирĕк-кăмăла, ăса тата тимлĕхе чĕррĕн палăртса тăракан-скер—пирĕн ӳссе пыракан ăрушăн, социалисăм çĕнтернĕ çĕршыври мĕн пур ĕççыннисемшĕн чи лайăх та тивĕçлĕ тĕслĕх пулса тăрать.

(ТАСС).

П Ĕ Л Т Е Р Н И

Мартăн 5-мĕшĕнче ПСÇЛКС Тĕпкомĕн черетлĕ V-мĕш Пленумĕ хăйĕн ĕçне туса пĕтерчĕ.

Пленум çак ыйтусене пăхса тухрĕ:

1. Комсомол организацисен нацилĕ республикăсемпе облăçсенчи ĕçĕ çинчен (Азербайджан, Казахстан тата Узбекистан комсомол Тĕпкомĕсен доклачĕсем).

2. Комсомол организацисен комсомолĕçсене комсомолран кăларнă чухне пулнă йăнăшĕсем çинчен, комсомолран кăларнисен апеђђацийĕсем çине формађнă-бўрократла пăхни çинчен тата çав çитменлĕхсене пĕтермели майсем çинчен.

3. Çамрăксене комсомола илес ĕçри çитменлĕхсене пĕтересси çинчен.

Пленум Тĕпком Бўровĕн составне ПСÇЛКС Мускав Обкомĕн секретарне В. А. Александров йулташа, Ленинград Обкомĕн секретарне Лубин йулташа, Украинăри ÇЛКС Тĕпкомĕн секретарне С. И. Усенко йулташа тата „Комсомольская Правда“ хаçат редакторне Н. А. Михайлов йулташа кĕртрĕ.

Пленумра ПСК(б)П Тĕпком секретарĕ А. А. Андреев йулташ пулчĕ.

Пленум пăхса тухнă ыйтусем тăрăх тивĕçлĕ решенисем йышăнса хăварчĕ.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕ.

Комсомол организацисен комсомолĕçсене комсомолран кăларнă чухне пулнă йăнăшĕсем çинчен, комсомолран кăларнисен апеђђацийĕсем çине формађнă-бўрократла пăхни çинчен тата çав çитменлĕхсене пĕтермели майсем çинчен

ПСÇЛКС Тĕпком Пленумĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанвар уйăхĕнчи пулнă Пленумĕ „Парти организацисен коммунистсене партирен кăларнă чухнехи йăнăшĕсем çинчен, партирен кăларнисен апеђђацийĕсем çине формађнă-бўрократла пăхни çинчен тата çав çитменлĕхсене пĕтермели майсем çинчен“ йышăннă постановлени Ленинла комсомол организацисене те пĕтĕмĕшпех тивет.

ПСÇЛКС членĕсем çине, уйрăмăнах комсомолĕçсене ПСÇЛКС ретĕнсенчен кăларас ыйтăва татса панă чух, тимлĕн тата кашни патне уйрăмăн çывырса, сисĕмлĕн пăхмали çинчен Сталин йулташ комсомол организацийĕсене тата ПСÇЛКС руководителĕсене пĕр хут çеç мар асăрхаттарнă.

Сталин йулташăн çав кăтартăвĕсене хисепе илсе, ПСÇЛКС Тĕпкомĕ комсомол организацийĕсене те комсомолĕçсем çине чунсăр, сисĕмсĕр, формађнă-бўрократла пăхнине пĕтермĕ пĕрре кăна мар хушнă.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн Пленумĕ 1937 çулхи майăн 5-мĕшĕнче çапла кăтартнăччĕ:

„Ленинла комсомолăн пĕтĕм ĕçĕ пĕр тĕллевпе — çамрăксене коммунисăмшăн кĕрешекен, коммунистсен партийе тата унăн Сталинла Тĕп Комитетне парăнса тăракан тăвас шухăшпа вĕрентсе ўстерес тĕллевпе пулса пырать. Çынсем çине, анчах вĕсене пĕтĕмĕшпе илсе мар, кашниç çамрăк çынна уйрăмăн илсе, йулташла, сисĕмлĕ, тинкерсе тата йуратса пăхасси комсомолра ытти кирек хăш обществăлă организацирисчен те ытларах палăртса тăмала. Унсăрăн мĕнле те пулин воспитани çинчен сăмах та пулма пултараймасть. Анчах комсомолăн нумайĕш руководителĕсем воспитанин çак тĕп условийĕ çинчан маннă, взысканисем хунă чухне пĕр чи пысăк вĕçепе — комсомолран кăларассипе çеç усă кураççĕ. Пĕр-пĕр комсомолĕца ĕçне тĕпĕ-йĕрĕпе пăхса тухмасăрах, унпа калаçмасăрах тата тепĕр чухне ăна чĕнмесĕрех те комсомолран кăларасси, ун çине, тепĕр чухне кăллех кўç хыçĕнче, взыскани хурасси вĕсемшĕн ним те мар. Комсомол нумай мĕлйунлă организаци-ха тесе, комсомолăн хăшпĕр руководителĕсем: унăн ретĕсенчен пĕр-икĕ çĕр, йе пин комсомолĕца кăларса пăрахсан нимĕн те пулас çук, тесе шутлаççĕ пулĕ. Çамрăк çынсен пурнăç кунçулĕ çине çакăн пек пăхни воспитани организацийĕ пулакан комсомолăн пĕтĕм ăшчиккине хирĕçлет тата бођшевикла мар, сийенлĕ, пăхни пулать“.

Унтан тата, хăйĕн 1937 çулхи майăн 23-мĕшĕнче йышăннă решенийĕнче комсомол Тĕп Комитечĕ çапла çырса хунăччĕ:

„Пуçламĕш организацисене, райкомсене, обкомсене, крайкомсене тата нацилĕ республикăсенчи комсомол Тĕпкомĕсене сойузлă тата производствăлă дисциплинăна пăснăшăн, сойузри обйазаннăçсене пурнăçа кĕртменшĕн тата йăлари киревсĕр хăтланăвсемшĕн тесе 1936-мĕш çул хушшинче тата 1937-мĕш çулăн пĕррemĕш квартăлĕнче ПСÇЛКС ретĕсенчен кăларнисем çинчен йышăннă решенисене пурин тĕлĕшпе те 1937 çулхи октăбĕрĕн 15-мĕшчен çĕнĕрен пăхса тухма, сăлтав çителĕклĕ пулмасăрах комсомолран кăларнисене пурне те комсомола кайала илме хушас.

Комсомолран тĕрĕс мар кăларнисене кайала илес ĕçе пуçламĕш организацисенчен пуçлас“.

Комсомолĕçсем çине чунсăр-формађнă пăхма йўраманнi çинчен 1937 çулхи август уйăхĕнче ПСÇЛКС Тĕпкомĕ çĕнĕрен астутарчĕ:

„Комсомолран кăларас йе комсомола кайала илес ыйтусене сўтсе йавнă чухне уйрăм комсомолĕç çине чунсăр-формађнă пăхас практикăна сивлес. Комсомол комитечĕсене комсомолран кăларас йе кайала илес ыйтусене сўтсе йавнă çĕрте кашни комсомолĕç çине йулташла тимлĕхпе тата сисĕмлĕн пăхма, комсомолĕçсем тăвакан айăпсен сăлтавĕсене тĕплĕн тĕпчесе палăртма хушас: ĕçе анкетăсемпе биографисенче кăтартма тивĕçлĕ йапаласене формађнă пĕлесси патне çеç илсе пымала мар, комсомолĕçсене чи малтан тĕпрен илсе, урăхла каласан, вĕсен политикăпа ĕçлĕх пахалăхне, вĕсем халăха, коммунистсен партине, совет влаçне мĕн таран парăннине пăхса хакламала“ (ПСÇЛКС Тĕпкомĕн IV-мĕш Пленумĕ йышăннă решенирен).

Çапах та, парти кăтартăвĕсене тата ПСÇЛКС Тĕпкомĕн решенийĕсене пăхмасăр, комсомол организацийĕсем ПСÇЛКС ретĕсене фашисăмăн троцкисла-бухаринла агенчĕсенчен тасатас тĕлĕшпе ĕçленĕ хушăра пысăк йăнăшсем тата пăсăклăхсем туса пăрахрĕç; çав йăнăшсемпе пăсăклăхсем Ленинла комсомола халăх тăшманĕсенчен—троцкисла-бухаринла шпионсенчен тата сăтăрçăсенчен малала тасатма кансĕрлеççĕ.

Комсомол организацийĕсем партипе совет влаçне парăнса ĕçлекен тўрĕ комсомолĕçсене ПСÇЛКС ретĕсенчен чуххăмăн, тĕрĕслемесĕр тĕплĕ сăлтавĕсемсĕрех кăларни, вĕсене ĕçрен, вĕренў заведенийĕсенчен кăларттармала тупи, час-часах тўрĕ комсомолĕçсене нимĕн сăлтав пулмасăрах халăх тăшманĕ йе тăшмансене пулăшакан тесе йат хупи çинчен калакан фактсем сахал мар.

Нимĕн сăлтавсăрах „тăшманла элемент“ йе „халăх тăшманĕсене пулăшакан“ тесе çынсене комсомолран массăлăн кăларнисем тăрăх уйрăмăнах Йарославђ, Грузи, Курск тата Омск организацийĕсем тăрлавсăр пулса тăраççĕ.

Йарославђ облăç организацийĕнче „тăшманла элементсем“, „двурушниксем“ тата „халăх тăшманĕсемпе çыхăнăскерсем“ тесе 1937 çулта комсомолран 969 çынна кăларнă. Тĕрĕслесе пăхсан, вĕсенчен нумайĕшĕ пирки кăларнисем тĕрĕс пулманни курăнчĕ. Комсомолăн Йарославђ облăçĕнчи Рыбинск хула комитечĕ Смарчков йулташа комсомол ретĕнчен „халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытнăшăн“ кăларнă. Çак решенийе тĕрĕсленĕ чухне, Смарчков комсомолĕç халăх тăшманĕсемпе „çыхăну“ тытни, унăн асламăшĕ пĕр, совета хирĕçлĕ ĕçленĕ Титовă патĕнче ачасене пăхса пурăннинче пулни палăрнă.

Омск облăçĕнчи ПСÇЛКС Голышмановски райкомĕ, „халăх тăшманĕ Кожевниковпа çыхăну тытнăшăн“ тесе, Костенко тата Почитайев йулташсене комсомолран кăларнă. Çав сăлтавсемпех вĕсене ĕçрен кăларнă. Çак ĕçе йĕрлесе тухсан, Кожевников халăх тăшманĕ пулнине шăпах Почитайевпа Костенко йулташсен материалĕсем тăрăх уçса палăртни курăннă.

Мускав хулинчи ПСÇЛКС Ленинский райкомĕ Мускаври пир-авăр ĕçĕн институчĕн студентне Подгорный К. йулташа „хĕçпăшалсăрланман троцкис“ тесе комсомолран кăларнă. Тĕрĕсленĕ хыççăн Подгорный йулташа комсомолран çакăн пек кăларни пĕртте тĕрĕс марри палăрнă. Подгорнăй йулташ ПСÇЛКС Мускав обкомĕн комсомола илес тата комсомолран кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комиççине Ленинский райком тĕрĕс мар тунине кăтартса жалăбă панă. Анчах Подгорный йулташ жалăбине комиççирe 1937 çулхи май уйăхĕнчен 1938 çулхи йанвар уйăхне çити пăхса тухмасăр выртарнă.

Комсомол организацисенчен нумайĕшĕ комсомолĕçсене, вĕсем ăнланман ыйтусене ăнлантарса парас вырăнне, „политикă тĕлĕшпе шанчăксăр“, „халăх тăшманĕ“ тесе, комсомолран кăлараççĕ.

Çапла, Курск облăçĕнчи ПСÇЛКС Шчигров райкомĕ комсомолĕç Бакулин йулташа, пĕр çĕршывра социалисăм тăвас ыйтăва ăнлантарса парас вырăнне, комсомолран кăларнă. Бакулин йулташпа çыхăну тытнăшăн райком татах 7 çынна кăларнă, вĕсен шутĕнче: Кашченко тата Голенишчева йулташсем. Вĕсене „Бакулина—троцкиссен йулашкине çине тăрса хўтĕленĕ“ тесе кăларнă тата техникумра диплома хўтĕлеме права памала мар тунă, комсомолкă-студенткă Галдина йулташа çав сăлтавсемпех комсомолран тата профсойуз организацинчен кăларнă. ПСÇЛКС Курск обкомĕ çак решенисене çирĕплетнĕ тата, çавăнпа пĕрлех, Бакулин йулташа комсомолран „кайа йулса“ кăларнăшăн ПСÇЛКС Шчигров райкомĕн секретарне Алексейев йулташа комсомолран тата ĕçрен кăларнă. Тĕрĕс мар кăларнă Бакулин йулташа ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ комсомола кайала илчĕ.

ПСÇЛКС Курск обкомĕ ПСÇЛКС Мантуров райкомĕн пропагандисне Иванов йулташа, комсомол Курск обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Уроженко йулташпа тавлашнă чух вăл пĕр çĕршывра социалисăм татăклăнах çĕнтерес ыйту çине Уроженко йул. тĕрĕс мар пăхнине хирĕç тăнăшăн, ăна „троцкист“ тесе ĕçрен кăларса, комсомолран кăларасси çинчен ыйту лартнă. Уроженко йулташ, ку ыйтува хăй тĕплĕн ăнланса çитеймесĕр, Иванов йулташа унăн тĕрĕс шухăшĕсенчен йарма хăтланнă та Чехăвăн унтер Пришибейевĕ пек тунă—„троцкист“ тесе Иванов йулташа пропагандис ĕçĕнчен кăларнă.

Сталин йулташ Иванов йулташăн çырувне хирĕç çапла çырать:

„Сирĕн çыруран Урженко йулташ урăхла, пĕтĕмпех ленинла мар шухăшсем тытни курăнать. Вăл—„халĕ пирĕн социалисăм татăклăнах çĕнтерчĕ, интервенци пулас çукки пирки тата капиталисăма тепĕр хут таварса лартас çукки пирки çирĕп шанчăк пур“, тесе калать иккен. Уроженко йулташ тĕпренех тĕрĕс мар шухăшлани пирки иккĕленў пулма пултараймасть. Уроженко йулташ çапла калани хамăр тавра мĕн пуррине ăнланманнипе тата ленинисăмăн пуриншĕн те ăнланмала шухăшсене пĕлменнипе, йе ĕнтĕ мăнаçланса кайнă çамрăк чиновникăн ниме тăман капшайчăклăхĕпе ĕç ăнлантарса пама пулать“. (И. Сталин).

Комсомол руководителĕсен йертсе пырас çĕрте унтерпришибейевла ĕç майĕсене татăклăн пĕтермеле, вăл майсем çамрăксене коммунисла вĕрентсе ўстерес пĕтĕм ĕçе тем пек пысăк сийен кўреççĕ тата Ленинла комсомола вараласçĕ; комсомолран тем тери сийен шухăшсене—капиталисăмла йĕри-тавралăха маиăçа хăварнине пĕтермеле, Ленинла комсомол çамрăксене коммунисăмшăн пулас çапăçусем валђи вĕрентсе хатĕрлекен паттăрла организаци пулнине йалан асра тытса тăмала.

ПСÇЛКС ретĕнчен чуххăмăн кăларнипе пĕрлех, комсомол комитечĕсем тата йертсе пырас ĕçре ĕçлекен уйрăм работниксем сĕшĕ тăрăх, комсомолран кăларнисене ĕçрен те кăлараççĕ.

Смоленск облăçĕнчи ПСÇЛКС Темкинский райкомĕ учителте ĕçленĕ Крупенин йулташа, халăх тăшманĕпе çыхăну тытнă тесе, комсомолран кăларнă та ăна педагогикла ĕçрен кăларттарнă. Тĕрĕсленĕ хыççăн çакă курăннă: Короđов,—Крупенин йулташа унпа çыхăну тытнăшăн айăпланă,—чăнах та суд умĕнче пулнă, анчах кайарахпа айăп пулманнипе ăна тўрре кăларнă. Апла пулсан та, Крупенин йулташ виçĕ уйăх хушши ĕçсĕр çўренĕ. ПСÇЛКС Тĕпкомĕ хутшăннă хыççăн çеç ăна комсомола тата ĕçе кайала илнĕ.

Комсомолăн Иванова облăçĕнчи Александровский райкомĕ „троцкист“ тесе Офицеров йулташ учителе ПСÇЛКС ретĕнчен кăларнă тата ĕçрен кăларттарнă. Обком комсомол Тĕпкомне Офицерова Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн оргăнĕсем арĕсленĕ тесе пĕлтернĕ. Тĕрĕсленĕ хыççăн, Офицерова елеклесе айăплани, ăна нихăçан та арĕслеменни палăрнă. ПСÇЛКС Тĕпкомĕ хутшăннă хыççăн, Офицеров йулташа комсомола тата ĕçе те илнĕ.

ПСÇЛКС-ран кăларасси çине чуххăмăн пăхнипе комсомолăн хăш-пĕр организацийĕсем ачасене пионер организацийĕсенчен тата халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытнă тесе вĕсене шкултан та кăларттарса йарасси патнех çитеççĕ.

Мускав тата Ленинград облăçĕсенче ПСÇЛКС хăшпĕр организацийĕсенче комсомол руководителĕсен тата пионерсен вожатăйĕсен куçĕ умĕнчех пионерсен галстукĕн зажимĕсем çинче контрреволђуцилĕ паллăсем пур тесе тăшманла провокаци сарнă. Комсомол руководителĕсенчен нумайĕшĕ, çав провокацине хирĕç кĕрешес вырăнне, хăйсене айăпласран сыхланса, пионерсене галстук çинчен зажимсене илтерне, илес мар текен ачасене айăпланă, хăш чух пионер организацийĕсенчен те кăларнă.

Комсомолĕç студентсене ПСÇЛКС-ран тĕрĕс мар кăларни тата комсомол организацисем хушса ыйтнă тăрăх вĕренне çĕртен те кăларни çинчен калакан фактсем нумай.

Харьков хулинчи хаçат ĕçне вĕренмели техникумра ПСÇЛКС комитечĕ Шуђженко йулташа „халăх тăшманĕпе çыхăну тытнăшăн“ комсомолтан кăларнă тата дирекци умне ыйту лартса ăна техникумран та кăларттарнă. Тĕрĕслесен Шуђженко йулташа комсомолра та техникумра та çыхăну та тытманни палăрнă. ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ çак ĕçе хутшăнсан, Шуђженко йулташа комсомолран та техникумра та хăвармала тунă.

Тбилиссинчи медицинă институтĕнчи комсомол организацийĕ Мегрешвили йулташа комсомолтан кăларнă тата дирекци умне ыйту лартса ăна институтран кăларттарнă. Ун çинчен тăракан ыйтăва ПСÇЛКС Тĕп Комитетĕнче пăхса тухнă чухне ăна айăпланисем тĕрĕс пулманни курăнчĕ. Вара Мегрешвили йулташа нимĕнле взыскани памасăрах комсомолта хăвармала тунă.

Çак тата çавсем йевĕрлĕ фактсем пулни мĕнрен килнĕ-ха?

Чи малтан, çакă вăл ПСÇЛК Сойузĕн руководствăра тăракан работникĕсем хушшинче комсомолтан кăларнипе паллă пулса мала тухма тата хăйсене сыхлăх çителĕксĕр тесе айăплама пултарасран сирсе хăварма тăрăшакан карйеристсем пуртан килнĕ. Çавăн пек карйеристсем, комсомолĕç çинчен зайавлени панă пулсан, вăл тĕрĕс мар пулин те, унтан хăвăртрах хăтăлмала, çапла вара хăйсене сыхăлăх çителĕксĕр тесе айăплассинчен çăлса хăварас, тесе шутлаççĕ. Çавăн пек карйеристсем, хăйсене сыхлăхлă çын пек кăтартма, комсомолĕçсене темле сăлтавпа та ПСÇЛКС ретĕнчен кăларма хатĕр.

Свердловск облăçĕнчи ПСÇЛКС Йегоршин райкомĕн секретарĕ Костарев йулташ, Красиђников комсомолĕç çинчен тăнă ыйтува сўтсе-йавнă чухне комсомолĕçсен пухăвĕнче пулса, çапла каланă: „Мĕн тума пирĕн тĕркĕшес тата материалсене тĕрĕслес, обкома йаратпăр, унта тĕплĕ пăхса тухĕç, ытлашши хытă айăплатпăр пулсан, тўрлетĕç. Кăларас пулать“, тенĕ.

Комсомолти тăрă шыв çине кăларайман халăх тăшманĕсемпе вĕсене пулăшакансем провокаци тăвас тĕллевпе елеклесе çырнă зайавленисем парассине организацилеççĕ тата, хăйсене çапасран хўтленес, тăшманла ĕмĕтпе комсомолăн тўрĕ, партипе совет влаçне парăннă членĕсене варалас шутпа, сыхăлăх çинчен çухăрашаççĕ.

ПСÇЛКС Архангеђск обкомĕн секретарĕ пулнă Кожин, халĕ тăрă шыв çине кăларнă халăх тăшманĕ, пĕле-тăрах тўрĕ комсомолĕçсене вараланă, вĕсене „тăшмансем“ тата „двурушниксем“ тесе пĕтернĕ.

Халăх тăшманĕ Петухов та ПСÇЛКС Архангеђск хула комитетĕнче çавнашкалах ирсĕр провокацилĕ ĕçсем тунă.

Иванова облăçĕнчи ПСÇЛКС Йурйев-Поđск райкомĕн секретарĕ пулнă Махлов, халĕ тăрă шыв çине кăларнă халăх тăшманĕ, комсомолĕçсене „тăшманла ĕçсем тунăшăн“, „саботаж тунăшăн“ айăпласа ПСÇЛКС-ран массăлăн кăларассине организациленĕ, а чăн-чăн халăх тăшманĕсене тата йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнисене хўтĕленĕ.

Маскăпа витĕнсе пытаннă халăх тăшманĕсем пур майсемпе те комсомол организацисенче пурин çине те шанăçсăр тата ĕненмесĕр пăхмала лару-тăру тума тăрăшаççĕ, çав лару-тăрура кам та пулин йат йанă комсомолеца хўтĕлеме тăракан сене кашнинех йăпăр-йăпар халăх тăшманĕсемпе килĕштерсе пурăнакансем, çителĕклĕ таран сыхăхлă марскер, тесе айăплаççĕ.

Комсомолăн хăшпĕр руководителĕсем, çав тăшмансен провокацилĕ ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларас вырăнне, сайра хутра кăна мар хăйсем те тăшман хыççăн калаççĕ, вара ĕç мĕнлине тĕплĕн пăхса тухмасăрах ПСÇЛКС-ран ăна парăннă тата тўрĕ комсомолĕçсене кăлараççĕ.

Çакна ăнланма вăхăт ĕнтĕ: ĕçе тĕплĕн пăхмасăрах комсомолтан кăларни, çынсем çине, ПСÇЛКС членĕсем çине чунсăр пăхни халăх тăшманĕсемшĕн кăна усăллă, мĕншĕн тесен çавăн пек, боđшевисăма хирĕçле ĕçсем ПСÇЛКС ретĕнче ытлашши шанăçсăрлăх сараççĕ, ПСÇЛКС-ран тĕрĕс мар кăларнисене тарăхтарса çиллентереççĕ, а фашисăм троцкисла-бухаринла агенчĕсем сайра хутра кăна мар çавăн пек тарăхнă йулташсене ваштах çаклатса илеççĕ те хăйсем хыççăн тăшмансен лачакине сĕтĕрсе кĕреççĕ.

Комсомол работникĕсем нумайĕшĕ ПСÇЛКС-ран чуххăмăн тата тĕрĕс мар кăларни çинчен калакан фактсенчен политикăлă выводсем туман, комсомолĕçсен жалăбисемпе апеђђацийĕсене ăшчиккинчен пăхса вĕренмен, апеђђацисене пăхса тухас ĕçе йăлтах ПСÇЛКС-не илес тата унтан кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комиççисене шанса панă. Тĕрĕслени çакна кăтартрĕ: çак комиççисем комсомол руководствинчен уйăрăлса кайнă, вĕсенче бўрократисăмпа волокитă пуç пулса тăраççĕ. Çĕршер апеђђацисене темиçе уйăх хушши пăхса тухмасăр выртаççĕ тата, йăлан пекех, çак комиççисем комсомолран кăларас пирки ПСÇЛКС райкомĕсем йышăннă решенисене механически çирĕплетсе пыраççĕ. Комсомолăн Куйбышев обкомĕнче 485 апеђђацийе халичен те пăхса тухман. Белоруççи комсомолĕн Тĕпмĕнче—425, Узбекистан ÇЛКС Тĕпкомĕнче—401, Воронеж обкомĕнче—358, Алтай крайкомĕнче—332 апеђђацийе пăхса тухман.

Комсомолтан кăларасси çинчен тăракан ыйту тăрăх решени йышăннă чухне, ПСÇЛКС-ран кăларнисен апеђђацийĕсене пăхса тухнă чухне тĕплĕн пăхманни, чунсăр пăхни пур. Комсомол комитечĕсем нумайĕшĕ комсомолĕç тунă кирек мĕнле айăплă ĕçĕн сăлтавне пĕлме тăрăшмаççĕ, ăна йăпăр-йăпар комсомол ретĕнчен кăларса пăрахаççĕ. Комсомолĕца ПСÇЛКС ретĕнчен кăларичен малтан асăрхаттарма, кун пек тунипе вăл йусанмасть пулсан—ăна ва вид лартма йе выговор пама, йусанма срук кăтартса пама йурамасть-и вара? Куђђанмала та, анчах комсомол организацисенче çакăн пекисене пĕртте тумаççĕ. ПСÇЛКС комитечĕсен ĕçĕнче çынсем çине, комсомолĕçсен ăраскалĕ çине тимлĕн пăхни çитмест-ха.

ПСÇЛКС организацийĕсем комсомолтан кăларнă чухне тунă пысăк йăнăшсем, кунсăр пуçне тата, комсомол руководителĕсенчен нумайĕшĕ комсомол организацийĕсен вĕрентсе ўстерес тĕлĕшпе ĕçлемелине маннă пирки, çавсенчен хăшпĕрисем, хăйсем политикă тĕлĕшĕнчен начар хатĕрленнине пула, вĕрентсе ўстерес ĕçе административлă йĕркепе, кăшкăрса ĕçленипе улăштарнă пирки пулаççĕ. Çак йăнăшсем комсомол организацисенче критикăпа, самокритикă çителĕксĕрри çинчен тата комсомолăн хăшпĕр работникĕсем комсомолĕçсен массинчен уйăрăлса кайни çинчен калаççĕ.

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн Пленумĕ комсомолăн пур организацийĕсемпе вĕсен пур руководителĕсене те боđшевикла сыхăлăха мĕнпур майсемпе çўле хăпартса пыма, комсомолри маскăпа витĕнсе пытаннă халăх тăшманĕсене малашне те тăрă шыв çине кăларса, тĕппипех тăпăлтарса пыма тата руководствăри унтерпришибейевла метăдсене, вĕсене Сталин йулташ комсомолĕç Иванов й. патне çырнă çырура кăтартса панă, ним йулмиччĕнех пĕтерме хушать.

ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн Пленумĕ пур ПСÇЛКС организацийĕн чи пысăк задачи—комсомолран кăларнă чухне тунă йăнăшсене тўрлетесси, ПСÇЛКС членĕсем çине чуххăмăн, ушкăнпе илсе пăхассине пĕтересси пулать, тесе шутлать.

Пире коммунисла парти вĕрентнĕ тăрăх, боđшевикла сыхăлăх—тăшмансене вĕсем темле маскă айне пытансан та, темле чейе тата йăрă пулсан та тăрă шыв çине кăларма пĕлнинче пулать,—çĕрĕк йăла тăрăх кирек мĕн пулассинчен малтанах хăтăлас тĕллевпе ПСÇЛКС ретĕнчен комсомолĕçсене çĕршерĕн кăларса пăрахнинче мар. Комсомолăн пур организацийĕсем те комсомолран кăларас йе комсомолĕçсене вĕсен прависене кайала таварса парас ыйтусем тăрăх решени йышăннă чухне тимлĕрех пулма тата йулташла тăрăшса пăхма тивĕçлĕ.

ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн йанварти Пленумĕн решенисене тĕпе хурса, ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕн пленумĕ пур комсомол организацисене те çаксене тума хушать:

1. Комсомолтан кăларас йе кăларнисене каллех комсомола илес ыйтусене пăхса тухнă чухне уйрăм комсомолĕçсен ăраскалĕ çине чунсăр, формађнă пăхас практикăна ним йулмиччен пĕтермеле. ПСÇЛКС ретĕнчен массăлăн, чуххăмăн кăларассине татăклăнах пĕтерсе хумала.

Пур комсомол комитечĕсене те каллех комсомолта тăмала тунисене комсомол документчĕсене ним тăхтаса тăмасăр, çийĕнчех пама тата вĕсене комсомол организацийĕсен ĕçне хутшăнтарма хушас.

2. Коммунисăм ĕçне парăннă тўрĕ комсомолĕçсене ПСÇЛКС-чен чуххăмăн кăларакан, вĕсен йатне тивĕççĕр варалакан тата вĕсене халăх тăшманĕсемпе пĕр хисепе кĕртсе хуракан работниксене, комсомолта йертсе пырас ĕçрен хăтарас таранах, çирĕп наказани памала.

3. Обкомсем, крайкомсем тата нацилĕ республикăсенчи комсомол Тĕпкомĕсем çумĕнчи ПСÇЛКС-не илес тата унтан кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комиççисене пĕтерес. Комсомолĕçсем паракан апеђђацисене тўррĕмĕнех обкомсен, крайкомсен тата нацилĕ республикăсенчи комсомол Тĕпкомĕсен, апеђђаци паракала чĕнсе, пăхса тухмала тăвас.

4. Комсомолăн мĕнпур пуçламĕш тата районти организацийĕсенче ПСÇЛКС ретĕнчен кăларасси тата комсомол йĕнĕпе взыскани парасси çинчен тăракан ыйтусене обйазатеђнă,—кам айăпне сўтсе йавмала,—çав комсомолĕç хăй унта пур чухне пăхса тухма хушас. Комсомолтан кăларасси йе комсомола взыскани парасси çинчен пуçламĕш организаци йышăннă кашни решенине обйазатеђнă ПСÇЛКС райкомĕн çав комсомолĕç унта пур чухне пăхса тухса çирĕплетмеле.

Комсомолĕçсене пурне те ăнлантарса парас: ПСÇЛКС райкомĕсемпе хула комитечĕсен комсомолтан кăларасси йе комсомолла взыскани парасси çинчен йышăннă решенийĕ пирки комсомолĕç обкома, крайкома, нацилĕ республикăри комсомол Тĕпкомне, ПСÇЛКС Тĕп Комитечĕ патне çитиччченех, жалăбă пама пултарать.

5. Мĕнпур обкомсене, крайкомсене тата нацилĕ республикăсенчи комсомол Тĕпкомĕсене комитетсенче пухăннă пур апеђђацисене те виçĕ уйăх хушшинче пăхса тухма хушас.

6. Тĕрĕс мар кăларнисене ПСÇЛКС членĕн прависене таварса памала тунă чухне, комсомола кайала илнĕ çынна комсомол документчĕсене ПСÇЛК Сойузĕн хăш райкомĕ, хăш хула комитечĕ памалине комсомол комитечĕсен хăйсен решенисенче тĕрĕс кăтартса памала тăвас.

7. Çўлте тăракан организацисем çав решенисен тĕрĕслĕхне тĕрĕслеме пултарччăр тесе, комсомолăн пĕтĕм организацийĕсене хăйсен решенийĕсенче ПСÇЛК Сойузĕнчен мĕншĕн кăлармала тунине уççăн та тĕрĕс кăтартса çырма хушас.

8. ПСÇЛКС организацисене комсомлăн вăл йе ку членĕ çинчен елек сарнă çынсене ответ тыттарма хушас; елеклесе пĕтернĕ комсомолĕçсене йăлтах реабилитировать тума тата, çав комсомолецăн йатне варалакан материалсем малтан хаçатра пичетленнĕ пулсан, реабилитировать тăвасси çинчен йышăннă решенийе хаçатра пичетлесе кăларма хушас.

9. Обкомсене, крайкомсене тата нацилĕ республикăсенчи комсомол Тĕпкомĕсене комсомолтан кăларнă май ĕçрен тата вĕреннĕ çĕртен кăларнисене советпа хуçалăхăн тивĕçлĕ оргăнĕсем урлă ĕçе тата вĕренес çĕре кайала илмеле тума хушас.

Ўкерчĕк çинче: Пăр çинче тĕл пулни. Варринче—паттăр папанинцăсем.
Пл. Халип фото-ўкерчĕкĕ. (Сойузфотон „Таймыр“ çинче пулнă спецкорĕ).

Чи тĕрĕс приговор

(Ишлей районĕнчи йалсовет тата колхоз председателĕсен пухувĕ йышăннă резолюцирен)

Епĕр, Ишлей райĕçтăвкомĕн пленумĕнче пулма пухăннă йалсовет тата колхоз председателĕсем, ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ — „сылтăмла-троцкисла блокра" тăрса тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннă Бухарин, Рыков, Йагода тата ыттисем пирки йышăннă приговора пĕтĕм чĕререн ырласа кĕтсе илтĕмĕр.

Фашиссене сутăннă çав виçĕ хут ылханлă тăшмансем чечекленсе пыракан ССР Союзĕнчи социалисăмла стройа сирпĕтсе, ĕлĕкхи пек капиталисăмла йĕрке, буржуази влаçне туса хурасшăн пулнă. Çав ирсĕр бандитсем ССР Союзĕн оборонă вăй-хăватне хавшатас тесе шпионла терророа ĕçсем туса пынă. Вĕсем Сталин пурнăçĕ çине алă çĕкленĕ. Фашиссен çав урнă йыттисем С. М. Кирова, М. Горькине, Менжинскине, Куйбышева вĕлерне.

ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ çав урнă йытăсене персе пăрахмала туса, пĕтĕм халăх ыйтакан приговора йышăнчĕ. Суд приговорне пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле ырлатпăр!

Большевиксен партийĕ тавра, пирĕн çулпуçĕ, пирĕн атте Сталин тавра тата тачăрах пĕтĕçер!

Пирĕн хăватлă та тĕреклĕ социалисăмла çĕршыва нимĕнле тăшмансем те çĕнтереймĕç!

Сывă пултăр коммунисла парти!

Сывă пултăр пирĕн çулпуçĕ аслă Сталин!

Социалисăмлă çĕршывра шпионсем валли вырăн çук!

Фашисăм йыттисем, йунлă бандитсем—Бухарин, Рыков, Йагода т. ыт. те пирĕн çулпуçа аслă Сталина вĕлересшĕн пулнă, пирĕн чечекленекен çĕршыва капиталиссемпе помещиксене парса, телейлĕ те савăнăçлă ĕçсыннисене пусмăра кĕртсе йарасшăн пулнă. ССР Союзĕн Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ вăл çынвĕлерен тăшмансем пирки тĕрĕс приговор йышăнчĕ. Епĕ, вĕсене персе пăрахма йышăннă приговора ырласа, совет судне чĕререн тав тăватăп. Пирĕн социалисăмлă çĕршывра шпионсем валли вырăн çук, вилĕм вĕсене!

Сывă пултăр коммуниссен партийĕ тата унăн çулпуçĕ Сталин йулташ!

Колхозник Г. Андрейев.

Оборонă ĕçне вăйлатар

ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕ çумĕнчи пионер вожатăйĕсем хатĕрлекен шкулри курсантсем—ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ „сылтăмла-троцкисла блокри" тискер заговорщиксене, тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннă çĕлен-калтасене персе пăрахма йышăннă приговора пĕтĕм кăмăлтан ырларĕç.

Паттăр совет разведкине чĕререн тав туса, курсантсем Совет Союзĕн оборонă ĕçне вăйлатма сăмах пачĕç. Курсантсем ВС, ПВХО значокĕсем илме нормăсене пама тытăнчĕç.

М. Александров.

Допризывниксем Хĕрлĕ Çар ретне кайма хатĕрленеççĕ

ШĂХАСАН. Çак кунсенче Шăхасан районĕнчи Осоавиахим райсоветĕ Уйкас-Кибекри вĕренӳ пунктĕнче допризывниксене вĕрентсе кăларчĕ. Допризывниксенчен Борисов, Василйев, Петров, Григорйев, Никитин, Скворцов т. ыт. чылай йулташсем „отлично" паллăпа вĕренсе тухрĕç. Допризывниксенчен пурте пекех çар ĕç техникине, политикăна тăрăшса вĕренсе пычĕç. Вĕренсе тухакансенчен 30 çын ГТО, 39 çын ГСО, 24 çын ПВХО значокĕсем илчĕç.

Вĕренӳ ĕçне вĕçленĕ йатпа допризывниксемпе Уйкас-Кибекри колхозниксен аслă пухăвĕ пулса иртрĕ. Райĕçтăвком председателĕн заместителĕ Скворцов йулташ оборонă ĕçне тимлĕн йĕркелесси çинчен доклад туса пачĕ. Допризывниксем пурте хăйсем çине конкретлă обйазателствăсем илсе, Осоавиахим организацисен ĕçне вăйлатса йама, политикăна вĕренсе пыма, обществăлă ĕçсенче хутшăнса ĕçлеме пулчĕç.

—Епĕр,—терĕ допризывник Борисов йулташ,—тăшман пирĕн çине вăрçăпа тапăнма хăйсан, пайанах мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретне тăратпăр. Епĕ хам йенчен призыва пур йенĕпе те лайăх хатĕрленсе кĕтсе илме пулатăп, йулташсене ăмăртăва чĕнетĕп,—терĕ.

В. Чернов.

Наградăсем

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 20 çул тултарнă майпа, совет влаçĕн тăшманĕсемпе çапăçнă çĕрте мухтавлăх тата хăйсене хăйсем хĕрхенмесĕр хăйулăх кăтартнăшăн тата Тинĕс-Çар Флочĕн карапĕсем, чаçĕсем тата подразделенийĕсем çапăçу ĕçне, политикăна, техникăна вĕреннĕ çĕрте пите пăллă çитĕнӳсем тунăшăн ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕпе командирсене, политработниксене, кĕçĕн командирсене тата краснофлотецсене—мĕн пурĕ 36 çынна Совет Союзĕн орденĕсемпе наградăланă.

(ТАСС).

МТС çуракине хатĕрленет

Ишлейри МТСтанци тракторсене мартăн 1-мĕшне йусаса çитерчĕ. Пурĕ 48 трактор йусаса лартнă.

Малтанхи вăхăтра тракторсене йусас ĕçре çитменлĕхсем, кирлĕ пайсене вăхăтра илсе килменнипе ĕçре пысăк чăрмавсем пулнă. Тракторсене хăвăртрах тата пысăк пахалăхпа йусассишĕн бригадăпа бригадă тата уйрăм трактористсем пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртува тухнă.

Социалисăмла ăмăртува сарса йанă хыççăн, чылай трактористсемпе специалистсем тракторсене йусас ĕçре стахановла ĕçлесе пычĕç. Уйрăмăнах Данил Селивестров, Д. Романов, Иван Романов, Макаров йулташсене кăтартмала. Селивестров 18 трактор, И. Романов 15 трактор йусанă.

Иртнĕ çулта трактор плугĕсем çителĕклĕ пулман пирки чылай тракторсен лашапа сухаламали икĕ касăлă плугсемпе ĕçлемеле пулнă. Халь трактор плугĕсене çителĕклĕ илсе килнĕ. Çĕмрĕккисене пурне те йусаса çитернĕ.

Анчах МТСтанцин пур машинисем те йусавлă мар-ха. Икĕ автомашинă, пĕр сейалка тата молотилка йусамала.

Иртнĕ çулта икĕ комбайн çеç пулнă, кăçал 8 комбайн çĕнĕрен илсе килмеле. Комбайнсемпе ĕçлеме вĕренсе тухнă çынсем 3, кунсăр пуçне 5 çын курсра вĕренеççĕ. Анчах кадăрсем çапах та çителĕклĕ мар-ха.

Кăçал уй-хир ĕçĕнче ĕçлеме 17 бригадă тунă. Тракторсене йусаса çитернĕ хыççăн, вĕсене уйрăм трактористсем çумне çирĕплетсе панă. Ĕç норми тăрăх кăçал кашни тракторпа 900 гектар сухаламала, пĕр комбайнпа 400 гектар вырса пуçтармала, пĕр молотилкăпа 1000 тоннă çапмала, сейалкăпа 300 гектар акмала.

МТСтанци çунтармали йапаласене çуракине иртерме çителĕклĕ илсе килнĕ, пурĕ 97 тоннă хатĕрленĕ.

Çуракинче тата ытти ĕçсенче культурлă-массăлă ĕçе сарса, стена хаçачĕсем кăларса тăма, хаçатсем вулама кашни бригадăрах ответлă çынсем уйăрнă. 5 бригадăра радио пулать.

Гер. Щербаков.

Çамрăк трактористс бригади

Никита Тимофейев 1936 çулта трактористсен курсĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн, Шăхасан районĕнчи МТС-ра тракторис пулса ĕçленĕ. Вăл трактор çине ларсан, малтанхи çулах хăйĕн пултарулăхне кăтартнă. Тимофейев йулташ лайăх ĕçленине кура, ăна трактор бригадин бригадирĕсен курсне вĕренме йанă. Вăл курсран лайăх паллăсемпе вĕренсе тухса трактор бригадине йертсе пыма тытăннă.

Тимофейевăн бригадинче 4 тракторис, 2 заправщик ĕçлет. Вĕсем пурте хăйсен ĕçĕсене йуратса ĕçлеççĕ. Çавăнпа та вĕсем куллентхи ĕç нормине 200 процент ытла тултарса пынă.

Тăрăшса ĕçлекен тракторис Тимофейев 41 центнер тĕштырă, 1500 тенкĕ укçа, Филиппов—1900 тенкĕ укçа, 54 центнер тĕштырă илнĕ.

Вĕсем тракторпа ĕçлемели инструкцине пăхăнса пыраççĕ. Çавăнпа та тракторсем çĕмĕрĕлни тата простойсем пулман. Сменă хыççăн, пĕр тракторис тепĕр тракториспа улшăннă чухне, йаланах тракторсене бригадир Тимофейев йулташ хăй тĕрĕслет. Вăл тракторпа ĕçленĕ вăхăтра та йаланах тракторсене тĕплĕн пăхса тухать.

Çапла вара Тимофейев бригади иртнĕ çулта кашни трактор пуçне 1031 гектар сухаласа 300 килограм ытларах çунтармали перекетлесе, районта чи малти вырăна тухнă.

Тимофейев йулташ кăçал тата ытларах сухалассишĕн тăрăшать.

Халĕ хăйĕн бригадинче агротехникă ĕçне вĕренессипе кружок организациленĕ. Унта колхозниксене те йавăçтарнă.

Г. Семенов.

7 сойă пĕрчинчен 315 килограм туса илнĕ

1931 çулти май уйăхĕнче Чурпай колхозĕнчи стахановла бригадăн бригадирĕ Скворцов Йетĕрне хулинчен киле кайнă чух çул çинче 8 сойă пĕрчи тупнă. Киле çитсен çав сойă пĕрчисене вăл анкартине лартнă. Шăтса тухсан, Скворцов сойă темиçе суртлине палăртнă. Вĕсем хăйсен тĕсĕсемпе пĕр-пĕринчен уйăрălса тăнă. Кĕркунне çав сойă пĕрчисенчен 3 пĕрчĕ çеç пулса çитнĕ. 1932 çулхи çуркунне çав 3 пĕрче каллех акнă. Вăл çул çав 3 пĕрчĕрен пĕр пĕрчĕ те туса илеймен. Çакăн çинчен Скворцов Шупашкара чăвашсен йалхуçалăх институтне пĕлтернĕ, Институт сăнаса пăхма Скворцов патне икĕ тĕслĕ сойă йанă. Пĕри сарă, амурский, скороспелый текен сурт, теприхура (йатне кăтартман). Икĕ суртне те вăл 1933 çулхи çуркунне анкартине акнă. Пĕрремĕш сурчĕ хĕл пулсан та пулса çитеймен. Теприхура сурчĕ октйаберĕн 10-мĕшне пулса çитнĕ. Вĕсенчен лайăхрах пулса çитнисене 7 пĕрчĕ суйласа илнĕ те, 1934 çулта çуркунне акнă. Кĕркунне çак 7 пĕрчĕрен 221 пĕрчĕ сойă туса илнĕ. 1935 çулта 4400 пĕрчĕ туса илнĕ. 1936 çулта çуркунне 4400 пĕрчĕ акнă. Анчах 2500 пĕрчĕ анчах шăтса тухнă. 2500 пĕрчĕрен кĕркунне 20 килограм сойă туса илнĕ. 1937 çулта çуркунне 4 килограм запас хăварнă, 16 килограмне 0,26 гектар çине акнă. Кĕркунне çак 16 килограм сойăран 315 килограм сойă туса илнĕ.

Кăçал вăл татах чылай опытсем тума шутлать.

Иртнĕ çул илнĕ 315 килограма кăçал вăл 4 гектар çине акма шутлать.

Ник. Цветков.

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри (Арагонири) фронтра халь те хайар çапăçусем пулса пыраççĕ. Мартăн 12-мĕшĕнче республикă çарĕсем Ебро йуханшыв çинчен тата Ихартан (Мартин йатлă йуханшыв çинчен) тата мартăн 13-мĕшĕнче — Аринйоран, Альосапа Андорраран ескадронсене куçарса кайнă. Пăлхавçăсен самолйочĕсем Каспе çине хытăн бомбăсем пăрахнă. Республикă авиацийĕ пăлхавçăсен капланса тăракан çарĕсен пункчĕсем çийĕпе темиçе хутчен çĕрлехи вĕçевсем тунă.

Центртипе кăнтăрти фронтсенче—улшăнусем çук.

* * *

Испани правителствин çыннисем çапла паллă туса калаççĕ: Хĕвелтухăçри фронтра наступленине пуринчен ытла Итали çарĕсем туса пыраççĕ. Хĕвелтухăçри фронтра пăлхавçăсен çар ĕçĕсене йалтах италйанцăсем йертсе пыраççĕ.

Хальхи вăхăтра пăлхавçăсен çарĕ, пуринчен ытла, марокканцăсенчен, колонисенчен илсе пынă салтаксенчен, вĕсене пăлхавçăсем Испанин Инфи текен колонийĕнчен (çурçĕрпе хĕвеланăç Африкăра) илсе пынă, тата Итали колонийĕсенчен илсе пынă чаçсенчен тăрать. Испанцăсенчен йĕркеленĕ çарсен чаçĕсем хăйсене персе вĕлересрен хăраса çеç наступленине каяççĕ, наступленине каймасан пеме тесе вĕсен хыçĕнче пулеметсем илсе пыраççĕ.

(ТАСС).

Йапони çарĕсен тискерлĕхĕ

ХАНЬКОУ, мартăн 15-мĕш. (ТАСС). Китай пичечĕ Китайăн 8-мĕш революцилĕ халăх çарĕн командуйущин—Чжу-Де телеграммине пичетлесе кăларнă. Чжу-Де хăйĕн телеграмминче Йапони çарĕсен етемле мар тискерлĕхĕ çинчен пĕлтернĕ. Бейпин—Ханькоу чукунçул тăрăхĕнчи йалсенче Йапони çарĕсем 50 пин çурт ытла вут тĕртсе çунтарса йанă. Мирлĕ пурăнакан çынсене пинĕ-пинĕпе вĕлернĕ. 200 пин çын сийĕн курса çимĕççĕр, çурт-йĕрсĕр тăрса йулнă.

„Пĕтĕм Китай граждăнĕсем тата пĕтĕм тĕнчери халăхсем Китай халăхĕ çакăн пек тискеррĕн асапланса пурăннине пулăшассине шанса, Йапони захватчикĕсен çакăн пек етемле мар тискерлĕхĕ çинчен пĕлтеретпĕр епĕр",—тенĕ телеграммăра.

Йапонцăсем Китай хресченĕсене хăйсен çĕрĕ çинчен хăваласа йараççĕ

ШАНХАЙ, мартăн 14-мĕш. (ТАСС). Китай пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Йапонин оккупацилĕ çар влаçĕсем Çурçĕр Китайра Чахар провинцин кăнтăр пайĕнче Китай хресченĕсенчен 50 мĕлйун му çĕр (пĕр му—1/16 гектар) туртса илме йышăннă. Китай хресченĕсене çав çĕрсем çинчен вăйпах хăваласа йараççĕ. Çав çĕрсене резервистсенчи Йапони емигрантĕсене параççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем кирлĕ вăхăтра Йапони çарне тăма пултараççĕ.

Йапони влаçĕсем саккуна хирĕçле ирсĕр ĕç тăваççĕ

Йапони пичечĕ советăн пулă тытмали „Вымпел" йатлă шхунă капитанне катăргăлă ĕçре ĕçлеме суд тунă фактă витĕр пытарать. Йутçĕршыв корреспонденчĕсем „Вымпел" шхунăн пурнăçĕ çинчен ыйтнине хирĕç, Йапонин йутçĕршыв ĕçĕсен министерствин представителĕ: „вăл ĕç тăрăх следстви пĕтмен-ха" тесе каланă.

Йапони „Асахи" хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 9-мĕшĕнче Йапони полицийĕ советăн „Кузнецкстрой" йатлă пароход капитанне Каратайева, Йапони влаçĕсем Хакодатре тытса чарнăскерне, тепĕр хут арĕсленĕ. Йапони влаçĕсем совет пароходĕн капитанне „хупă порта кĕнĕшĕн" тесе суда парса, ăна çар вăрттăнлăхне сыхласси çинчен кăларнă саккунпа айăплама шутлаççĕ.

(ТАСС).

ХРОНИКĂ

ССР Союз Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ 1938 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче совета хирĕçле „сылтăмла-троцкисла блок" ĕçĕ тăрăх судпа айăпласа Н. И. Бухарина, А. И. Рыкова, Г. Г. Йагодана, Н. Н. Крестинскине, А. П. Розенгольца, В. И. Иванова, М. А. Чернова, Г. Ф. Гринькона, И. А. Зеленскине, А. Икрамова, Ф. Ходжайева, В. Ф. Шаранговича, П. Т. Зубарева, П. П. Буланова, Л. Г. Левин, И. Н. Казакова, В. А. Максимов-Диковскине, П. П. Крючкова персе вĕлерме йышăннă приговора мартăн 15-мĕшĕнче пурнăçа кĕртнĕ.

(ТАСС).

Ответлă редактор Н. М. СЕМЕНОВ.

ЙУЛАШКИ ХЫПАРСЕМ

Австри—Германи колонийĕ

Венăран пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 15-мĕшĕнче унта Гитлер пынă.

Германин йутçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Риббентроп та çавăн пекех Венăра. Унпа пĕрле—Германин йутçĕршыв ĕçĕсен министерствинчи йертсе пырас ĕçри чиновниксем.

Германин Австри территоринчи çарĕсен главнокомандуйущийĕ генерал Фон Бок халиччен пулнă Австри çарĕсен пур чаçĕсем те „фӳрера тата рейхсканцлере" присăга парасси çинчен приказ кăларнă.

Австри çарĕсене Германине куçарма пуçланă. Англи пичечĕн сведенийĕсем тăрăх, çак çывăх кунсенче Австри çарĕсене 30 пин салтак Германине куçарасса кĕтеççĕ. Çакăн пек нумай çарсене унта куçарни ĕнтĕ Германи фашисĕсем Австрин çав çарĕсене шанмаран килет. Австрире Австри çарĕсем пулни Австрине йышăнас ĕçре Гитлершăн пит пысăк хăрушлăх пулса тăрать. Австри казармисенче Германи çарĕсем туллийех.

Чехословаки хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Австри правителстви майлă пулнисене, çавăн пекех тата социал-демократла партипе ытти партисенче пулнисене, пĕр сăмахпа каласан, фашисăма хирĕçле çынсене миçе çынна арĕсленине шутласа кăларма та çук. Правителствăн пур учрежденийĕсенче те тасату пырать. Влаçсем панă хушу тăрăх правителствă учрежденийĕсенче, суд учрежденийĕсенче, банксенче службăра тăракан йеврейсене ĕçрен кăлараççĕ.

(ТАСС).

Лондонри демонстраци

ЛОНДОН, мартăн 15-мĕш. Компартин Лондонри организацийĕ Лондонра фашисла Германи Австрине йарса илнине хирĕç протестлекен митингсемпе демонстрацисем туса иртерет. Пĕрремĕш митинг ĕнер Гайд-паркра пулса иртнĕ. Унта темиçе пин çын пулнă. Митинг хыççăн демонстраци пулса иртнĕ. Полици демонстрацине салатса йама хăтлanса пăхнă, анчах ăнăçсăр пулнă. Демонстрантсем малтан правителствă çурчĕ патне, унтан общинăсен палати çурчĕ патне пынă. Утлă полицин пысăк нарйачĕсем демонстрацине пухăннă çынсене салатса йанă, кайран вĕсене урамсем тăрăх йĕрлесе хăваласа пынă. Пĕр хĕрарăма амантнă, виçĕ çынна арĕсленĕ.

(ТАСС).

Леон Блюм сăмахĕ

ПАРИЖ, мартăн 14-мĕш. (ТАСС). Ĕнер каçхине Францин çĕнĕ правителствин пуçлăхĕ Леон Блюм сăмах тухса каланă, ăна Франціри мĕн пур радиостанцисем урлă панă. Вăл сăмахра Блюм çапла каланă:

„Епĕ халь çеç республикă президенчĕ умне правителствăна тăратрăм. Çитес кĕçнерникун правителствă палатăсем умĕнче пулать, хальхи вăхăтра епĕ ăна мана итлекен пĕтĕм французсем умне тăрататăп. Правителствă обчăлăх шухăшĕ кĕтнĕ пек пулмарĕ, хальхи тапхăр ыйтнă пек пулмарĕ. Епĕ ăна никам пек те мар лайăх пĕлетĕп, мĕншĕн тесен епĕ халăх фрончĕ тавра çĕршывăн мĕн пур демократилĕ тата республикăлă вăйĕсене пĕтĕçтерекен чăн-чăн наци правителстви тăвасшăн тăрăшнă. Обчăлă шухăшсем епĕ ăнланман хирĕçӳсене çапса хуçсанах, епĕ çине тăрсах тата пĕтĕм хăйулăхпа çакна тăвассине тепĕр хут пуçарма хатĕр.

Çапах та епĕр вăйлă правителствă, мĕншĕн тесен епĕр çĕршывăн нумай пайĕ пулса тăратпăр, урăхла каласан, халăхсем сасăласа кăтартнă ирĕк пулса тăратпăр. Епĕр историн хăрушă тапхăрĕнче пурăнатпăр, апла пулин те Франци пурăнакан лару-тăрува лăпкăн тата татăклăн пăхса хаклатпăр".

Чехословаки çинче

Чехословакири пичет пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 12-мĕшĕнче кăнтăрла тата çĕрле Германин темиçе çар самолйочĕсем тĕрлĕ вырăнсенче Чехословаки чикки урлă вĕçсе каçнă, кайран каллех Германийе таврăннă.

(ТАСС).

Сойузпичетĕн
Чăваш республикинчи кантурне
Инструктор-бухгалтер—2, бухгалтер—2
тата
плановик—1
кирлĕ.

Шупашкарти кирпĕч заводне
ПЛАНОВИК-ЕКОНОМИСТ КИРЛĔ
Хваттер пур. Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.
Çавнашкалах çезонлă тата йалан ĕçлеме *РАБОЧИСЕМ КИРЛĔ*
Обшчежити пур.
Дирекци.
3—1.

Академи театрĕнче
Мартăн 17-мĕшĕнче
Вырăсла спектакль
ПРЕМЙЕРА
Н. В. Гоголь
РЕВИЗОР
(5 пайлă комеди)
Аслă режиссор Г. В. СТРАНСКИЙ лартать.
Художник Й. Н. САПОЖНИКОВ.
Талон № 139.
Абонемент № 8, талон № 14.

СБЕРЕЖЕНИЯ УДОБНО и ВЫГОДНО хранить В СБЕРЕГАТЕЛЬНОЙ КАССЕ

ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМ

пур граждăнсенчен те вкладсем йышăнаççĕ тата вкладчик пĕрре ыйтнипех вкладсене пĕтĕмпех йе кирлĕ чухлĕ пайне алла параççĕ.
Вкладсем çинчен никама та пĕлтермеççĕ тата вĕсене никам та илме пултараймасть.
Вклад ук ине вкладчик кама пама хадаланине йышăнаççĕ.

Вкладчиксене вкладсем тăрăх процентсем тӳлеççĕ.
Вкладчик ыйтнă тăрăх унăн вкладне (укçине) кирек ăçти перекет кассине те куçарса параççĕ.
Аккредитивсем алла параççĕ тата вĕсем тăрăх укçа тӳлеççĕ.
Государствă займĕсем тăрăх выльав укçине тата купонсемшĕн тӳлеççĕ.

3-мĕш № окно
Вкладсене кунта йышăнаççĕ

ЕСĔР ПЕРЕКЕТ КАССИНЧЕ ВКЛАДЧИКРЕ ТĂРАТТĂР-И?

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха 15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 135 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста Заказ № 197 Тираж 15.6?5 25—94 м. п. 1—1 п. л.